Иванов К.В. Пăртта ачипчи: [хроника]; Вăранăр, тапранăр!; Дубинушка: [сăвăсем]; Икĕ хĕр; Тимĕр тылă; Тăлăх арăм: [юмахсем]; Нарспи: (поэма); Шуйттан чури: (трагеди сыпăкĕ); Выçă аптăранисем; Хальхи самана :[сăвăсем] / К.В. Иванов // Чăваш литератури. – Шупашкар, 1951. – С. 218-255.



(1890—1915)

# К. В. ИВАНОВ

Константин Васильевич Иванов Ĕпхӳ кĕпĕрнинче, Пелепей уездĕнче, Слакпуç ялĕнче (халĕ Пушкăрт АССР-ĕн Пишпӳлек районне кĕрет), 1890 çулхи майăн 15(27)-мĕшĕнче, пуян хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ.

1898 çулта К. В. Иванов хăйсен ялĕнчи пуçламăш шкула вĕренме кĕнĕ. Виçĕ çул вĕренсен, тăваттăмĕш çулĕнче Кекен ялне, мăн аппăшĕ учительре ĕçлекен шкула куçса, унта вĕренсе тухнă. 1902 çулта К. В. Иванова Пелепейри двухкласнăй шкула вĕренме ăсатнă. Унта пĕр çулталăк вĕренсен, 1903 çулта вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне куçать. Чĕмпĕрте 1903—1905 çулсенче вăл хатĕрленӳ класĕнче вĕренет, 1905 çулта кĕркунне ăна учительсен шкулĕн 1-мĕш класне йышăнаççĕ.

1905—1907 çулсенчи революци хумĕ Чĕмпĕрти чăваш шкулне те çавăрса илнĕ. 1906 çулта кĕркунне ку шкулта вĕренекен ачасем шкул программисене урăхлатас, шкул йĕркине çĕнетес майпа пăлханаççĕ. К. В. Иванов çав май вырăссен «Отпустили крестьян на свободу» ятлă революцилле-сатирăлла юррине чăвашла куçарать. 1907 çулăн пуçламăшĕнче Чĕмпĕр шкулĕнче вĕренекен ачасем политикăлла митингсем туса ирттернĕшĕн К. В. Иванов вĕреннĕ класри ачасене пурне те шкултан кăларса ямалла тăваççĕ. Вĕсемпе пĕрле К. В. Иванов та пулнă.

Шкултан кăларса янă хыççăн К. В. Иванов Благовещенский Завод тата Бирск хулисенчи семинарисене кайса пăхать, анчах унта ăна вĕренме йышăнман 1907 çулта кĕркунне И. Я. Яковлев К. В. Иванова Чĕмпĕре чĕнсе илсе чăвашла кĕнекесем кăларас ĕçе хутшăнтарать. Çак ĕçе туса пынипе пĕрлех К. В. Иванов хăй те çырма тытăнать. 1907—1908 çулсенче вăл «Икĕ хĕр», «Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм» юмахсене, «Выçă аптранисем», «Хальхи самана» сăвăсене, «Нарспи» поэмăна, «Шуйттан чури» трагедин, «Пăртта

йăхĕ» хроникăн сыпăкĕсене çырать, М. Ю. Лермонтовăн «Калашник хуçа çинчен хывнă юрра», «Тĕрме çынни», «Çынсемпе хумсем», «Парăс», «Пурнăç курки», «Чул ту», «Ту тăррисем» сăввисене, А. В. Кольцовăн, Н. А. Некрасовăн, Н. П. Огаревăн хăшпĕр сăввисене куçарать. 1908 çулта вăл çырнă тата куçарнă произведенисем икĕ кĕнекере—«Нарспи» поэмăпа сăвăллă юмахсем «Сказки и предания чуваш» ятлă кĕнекере, «Калашник хуçа çинчен хывнă юрă» кĕнекере—пичетленсе тухаççĕ.

1909 çулта К. В. Иванов, хăйне тĕллĕн хатĕрленсе, Чĕмпĕр тимназинче экзамен парса учитель ятне илет. 1910 çулта ăна И. Я. Яковлев тăрăшнипе Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ çумĕнчи хĕрачасен двухкласнăй училищинче чистописанипе рисовани вĕрентме йышăнаççĕ. 1911—1913 çулсенче К. В. Иванов шкул ачисене вĕрентмелли кĕнекесем валли ятарласах «Çулталăк хушши», «Сăпка юрри», «Кĕркунне», «Чĕкеç» сăвăсене куçарнă, çырнă. П. В. Пазухин хатĕрленĕ «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним» ятлă кĕнеке валли халăх юррисенчен «Хурăн çулçи», «Хура ĕне», «Çÿлĕ ту», «Текерлĕк» юрăсене çырса панă.

1914 çулта кĕркунне туберкулез чирĕпе тата хырăм катарĕпе чирленĕ К. В. Иванов Чĕмпĕртен тăван яла тухса кайнă. Çав чирсенчен К. В. Иванов сывалайман. 1915 çулхи мартăн 13(26)-мĕшĕнче вилнĕ.[29]

## ПĂРТТА АЧИПЧИ

### I. Кашкăрсем

Пирĕн ратне ашшĕ Кашкăр пулнă. Вăл тĕне кĕмен чăваш. Унăн икĕ ывăл юлни паллă: пĕри Кашкăр Иванĕ, тепри Кашкăр Куçми. Иванин йăхĕнчен юлнисене «Пăртта ачипчи» теççĕ, Куçминне—«Куçма ачипчи». Кашкăр хăй ăçтан килнине те пит аванах пĕлекен çук. Ваттисем Пелепейрен, вырăссем килсе тулсан, саланнă теççĕ. Ĕлĕк пирĕн ял вырăнĕнче вăрман анчах пулнă, унта кашкăрсем пит нумай çÿренĕ. Пирĕн асатте те хамăр ял тĕлти вăрмана килсе ларнă та кашкăр тытса пурăннă. Çавăнпа ăна Кашкăр тенĕ, теççĕ. Кашкăр хăй мĕнле вилни те паллă мар. Ун ывăлĕ Куçминчен юлнă йăх Пăрттасем пекех нумай, усал, çмил мар. Мĕншĕн вăл апла? Кашкăр Иванĕн арăмĕ Пăртта пулнă. Пăртта пек хастар арăм ялта пулман. Пĕтĕм яла вăл хăй аллинче тытнă. Пурте ун умĕнче чĕтресе тăнă. Хуть кама та кастарас тесен кастарнă, кастармасан илсе кĕрсе ĕçтерет-çитерет те кăларать те ярать. Унăн пилĕк ывăл пулнă: Ванюшке, Степан, Симун, Пĕрчче, Хветут. Юлашки ывăлĕ Хветучĕ тимĕрçĕрен пулнăскер.... Хветут Вăрăм-Ухтерене сăра ĕçме чĕнме каять: «Пăртта патне пăртлаттарса, Ванюшке патне вашлаттарса, Симун патне сиктерсе».

Вăрăм-Ухтерен[1] калать: Ачам-ача-а-ам. Эсĕ тимĕрçĕ ывăлĕ иккен.

Пăртта ывăлĕсене те питех ирĕк паман. Çилли килсен çаптарнă, çилĕ çук чух темтепĕр илсе çитернĕ, ачашланă. Çапла пулнă вăл Пăртта карчăк. Çавăнпа унăн йăхĕ те çавăн пекех пулнă: хаçтар, çмил, усал, ырă.

[1] Вăрăм-Ухтерен—пуян старик пулнă. Вăл Хушăлкасен çĕрне илсе пурăннă. Халь те пулсан Хушăлка çĕрĕнче Ухтерен çăлĕ текен çăл пур.

Манăн тÿрĕ асаттесем ак çаксем: Кашкăртан—Кашкăр Иванĕ, Кашкăр Иванĕнчен—Симун, Симунтан—Никулай писĕр, Никулай писĕртен—Васинка пуян, Васинкаран—эпĕ Кĕçтук. Тепĕр паллă: Кашкăр Иванĕн, ывăлин, Ванюшкен ывăлĕ Никандр пулнă. Вăл халь те пурăнать. Вăл—эрех çăварĕ. Нумай та пулмасть-ха ак вăл хăйне фотографияра ÿкерттернĕ: хăй ларать, çумĕнче кулаç, аллинче эрехлĕ кĕленче. Çапла çын Пăртта асаннен ачипчи. Кашкăр ратни халĕ çур яла яхăн пур. Унтан кĕçĕнрех ратне ялта—«Хураç».

## 2. Пăртта карчăк

Хĕлле Ванюшкен салтака каймалла пулнă. Салтака пама Ĕпхĕве каймалла пулнă. Ванюшкене ăсатма ашшĕпе амăшĕ кайнă. Ванюшке ун чух 18 çулта пулнă. Ун шухскерĕн салтака каясси килмен пит. Ун чух ахаль те вăрçă пуçланать тие пуçланă. Вăрçă хăрушă япала. Вĕсем Ĕпхĕве çитнĕ те пĕр хăна килне кĕнĕ. Хăна килĕ вырăссем-пĕлĕшсем пулнă. Пăхансан, Ванюшкене чĕнчĕç. Ку пĕлĕшсем Пăрттана Ванюшкешĕн ашшĕ кайтăр тее пуçланă. Пăртта Ивана ярасшăн мар: ватă вăл, вăйĕ çук, килте ман ывăлсем тата та нумай-ха, Ванюшкесĕр пуçне те, тенĕ. Ыран каяс тенĕ чухне хайхи пĕлĕшсем Ванюшкене кантăр çурăмĕсем айне пытарнă та хунă. Тепĕр кун шыраççĕ-шыраççĕ, Ванюшке—çук. Вара Пăртта стариккине панă та янă. Ашшĕне илсе кайсан Ванюшке тухнă кантăр айĕнчен. Киле таврăннă чух Пăртта хĕне-хĕне таврăннă ăна. Эс пĕтертĕн асăна, эс пĕтертĕн, ак сана, ак сана. Иван старике вăрçах илсе кайнă. Вăл вара вăйсăрскер çул çинчех пĕтнĕ. Ванюшкине савăнăç. Çапла пулнă пирĕн Пăртта асанне. Халь те пулсан Пăртта ачипчисем вăййа тухсан парăн-парăн сикнĕ чух: «Пăртта патне пăртлаттарса, Ванюшке патне вашлаттарса, Симун патне сиктерсе» тесе такмакласа сикеççĕ.

16—20 августа 1906 г.

## ВĂРАНĂР, ТАПРАНĂР!

Хура халăха ирĕке янă
Нарсăн вунтăххăрмĕш кунĕнче,
Анчах çĕр халăха пулаймарĕ—
Ак сире улпутсен ырлăхĕ.
Вăранăр, тапранăр,
чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма,
выçă халăх!
Халăх хăй çиллине
хăпарттăр!
Малалла, малалла,
малалла!

Хресченсем çĕрсĕр пит аптраççĕ,
Улпутсем уншăн пит хавас,
Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ
Йÿн хака хăй ĕçне ĕçлеме.
Вăранăр, тапранăр,
чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма,
выçă халăх!
Халăх хăй çиллине
хăпарттăр!
Малалла, малалла,
малалла!

1906.

## ДУБИНУШКА

Юрăсем нумай илтнĕ эп
хам çĕршывра.
Савнăç мар,
усал хуйхă çинчен вăл.
Çавсенчен пĕр юрри
тăрса юлчĕ пуçа,
Ĕçлекен хура халăх юрри вăл.
Эх, чукмарăм та, ух! тер.
Эх, ешĕлĕм те хăех кайĕ.
Туртăпăр, туртăпăр
Та ух! тер.

Акăльчан, чеескер,
ĕçĕнче пулăшма
Машина та машина тăвать вăл.
Пирĕн вырăс çынни
ĕçлеме хĕн пулсан,
Чукмăрне юрласа та ярать вăл.

Эх, чукмарăм та, ух! тер.
Эх, ешĕлĕм те хаех кайе.
Туртăпăр, туртăпăр
Та ух! тер.

1906.

## ИКĔ ХĔР

Хăйĕн аслă хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: мĕн мăнтăр?
— Пирĕн атте килĕнчи
Кăвак лаша пит мăнтăр.
— Аслă каларăн, хĕрĕм.
Унтан ыйтать: мĕн тутлă?
— Пирĕн атте килĕнчи
Вĕллери пыл пит тутлă.
— Аслă каларăн, хĕрĕм.
Татах ыйтать: мĕн çемçе?
— Пирĕн атте килĕнчи
Тӳшек-минтер пит çемçе.
— Аслă каларăн, хĕрĕм,
Хисеп турăн аçуна,
Ĕнтĕ сана çакăншăн
Çур мулăма паратăп.

1907.

Унтан кĕçĕн хĕрĕнчен
Ашшĕ ыйтать: мĕн мăнтăр?
— Çут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал.
Унтан ыйтать: мĕн тутлă?
— Ыйхă тутлă, тĕнчере
Унтан тутли нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал.
Татах ыйтать: мĕн çемçе?
— Алă çемçе, тĕнчере
Унтан çемçи нимĕн те çук.
— Санра пархатар сахал,
Эсĕ манăн хĕрĕм мар!

Ашшĕ вара ку хĕрне
Хăваласа ячĕ, тет.

## ТИМĔР ТЫЛĂ

Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпать инкесен.
Мĕншĕн-ши вăл? пĕлĕр-ха!
Акă мĕншĕн, калам-ха!
Пирĕн чăваш арăмĕ
Тимĕр тылла юратмасть,
Пулсан пултăр йĕс тылă,
Йывăççи те начар мар.
Тимĕр тылă ăшĕнче
Шурă шуйттан ларать, тет.
Тимĕр тылла тытсанах,
Шăлĕсемпе шаккать, тет.
Кантăр тыллас тесенех,
Çӳпне куçа кӳртет, тет.
Çав çӳп куçра юлсассăн,
Çын тухатмăш пулать, тет.
Çав тухатмăш хушнипе
Тимĕр тылă çĕрĕпе
Урам тăрăх, хир тăрăх
Шăлтăртатса çӳрет, тет.
Тылă сиксе пынă чух
Çулĕ çинче çын пулсан,

Ана хӗссе вӗлерсе,
Юнне ӗҫсе каять, тет.
Ӗнтӗ пӗлсе ҫитрӗр-и
Мӗншӗн пирӗн инкесен,
Тимӗр тылӑ тесенех,
Сехри хӑпса тухнине?
Ҫам та пулин шанмасран,
Ӗ вӑрҫасран хӑраса,
Пӗр ӗҫ ҫинчен калам-ха,
Хамӑр ялта пулнине.

* * *

Пирӗн ялта пӗр карчӑк
Пурӑнатчӗ ӗлӗкрех.
(Халь ӗнтӗ вӑл тупӑкрах
Выртать масар хысӗнче).
Пурӑнӑҫа ҫав карчӑк
Ҫӗмӗрттеретчӗ анчах.
Пурччӗ унӑн качака,
Икӗ сурӑх, пӗр кушак,
Чалӑш пӳрчӗ тӑрринче
Тӑманасем усратчӗ,
Тӑманасем патӗнчех
Тимӗр тылли ларатчӗ:
Пит хӑрушӑ япала
Пӗр кӑтӑрса кайсассӑн!
Ӗнтӗ хӑвӑр та пӗлӗр
Карчӑк суккӑр пулнине,
Мӗншӗн тесен карчӑкӑн
Тимӗр тылли пур-ӗҫке.
Кантӑр шӑмми ҫӳппине
Куҫа кӳртет шур шуйттан.
Суккӑр пулсан инҫех мар
Тухатмӑша тухма та.
Ку карчӑк та—ӑҫти ҫук
Тухатмӑшчӗ таврара.
Ана пӗлмен ҫын та ҫук,
Палламан йытӑ та ҫук.
Пурччӗ тата карчӑкӑн
Икӗ тӑлӑх кинӗсем:
Икӗ кин те лайӑх кин,
Иккӗшӗ те сарӑ кин.
Аслӑ кинӗ мӗн ятли
Пире халӗ кирлех мар:
Хайне кӗвӗллӗ арӑмччӗ,
Тӳрриперех каласан,
Хитрех те мар мухтама,
Начар та мар хурлама.

Кӗҫӗн кинин, каласан,
Ячӗ унӑн Чӗкеҫчӗ,
Хӑй те чӗкеҫ пекехчӗ,
Ытарма ҫук аванччӗ,
Алли ҫӑмӑл ӗҫ тума,
Тути ҫӳхе чуптума.
Чӗкеҫ кинне карчӑкӗ
Темшӗн ытла юратмасть.
Хӑвӑр тупӑр мӗншӗнне,
Ана чӗлхем калаймасть.
Куҫӗ-пуҫӗ пит йӑваш,
Сын савӑнса тӑмалла,—
Ҫапах карчӑк юратмасть,
Ухмах тесех шухӑшлӑн.

* * *

Ҫакӑ кинӗ яланах
Минкӗретет карчӑка:
— Апай, яр-ха хӑнана,
Апай, яр-ха хӑнана!
— Пуҫ ҫавӑрмӑш, ҫӗр-ҫӑтман,
Ситӗ сынна йӳтетме!
Авантарах ӗҫне ту,
Вӑхӑт ҫитсен ярӑп-ха.
Чӗкеҫ кинӗ ахаль те
Ӗҫне тӑвать ҫунтарса,
Карчӑк ҫапах Чӗкеҫне
Вӑрҫать ӗҫне туманшӑн.
Суккӑр карчӑк-кӑрчӑкӑн
Куҫ курманни ахаль мар.
Вӑхӑт ҫитсен, хӑй вилсен,
Ярӗ-ха вӑл хӑнана.
Виҫӗ кунччен Чӗкеҫ кин
Ват карчӑка йӳтетрӗ:
— Апай, яр-ха хӑнана,
Аппам патне каям-ха.
— Ай, ҫӗр-ҫӑтманӑ пуҫна!
Ырра мар-тӑр ку кинӗм.
Виҫҫӗмӗш кун каҫ пулсан,
Карчӑк ытлах ҫиленчӗ.
— Апай, яр-ха хӑнана,
Апай, яр-ха хӑнана!
— Каях, каях, йӳтетмӗш,
Курӑн-ӗҫке ху кунна.
Кӗҫӗрех кай, кӗҫӗрех.
Пуҫу кунта ан пултӑр!
Кин васкаса савӑнтах
Сӗтпе юрчӗ виҫ юсман:

Хăвăр пĕлетĕр: юсман,
Ырăсене асăнса
Вĕрсе-сурса пĕçерсен,
Пит хăватлă япала.
Пирĕн ялта яланах,
Инçе çула кайнă чух,
Усал-тĕсел тивесрен
Юсман чиксе каяççĕ.
Çапла пирĕн инке те
Хăй лашине кӳлчĕ те
Тухса карĕ сĕм-çĕрле
Акăр ялне хăнана.

* * *

Тимĕр тылă шалтлатать,
Усал карчăк сӳс тыллать.
Йĕс тăпсаллă хапхана
Уçать чĕлхе каласа:
— Шалт-шалт, тыллăм,
шалт тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе карĕ çулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Юрă юрлать, чуптарать:
— Уйăх çути çап-çутă,
Акăр çулĕ тап-такăр,
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе юрнă юсманăм!
Пăрахать те хăварать
Пĕр юсманне çул çине.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Юсман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă хăраса,
Сиксе карĕ килнелле.
— Шалт-шалт, тыллăм,
шалт тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм.
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе пырать çулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Татах юрлать юррине:
— Уйăх çути çап-çутă,
Акăр çулĕ тап такăр,
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе юрнă юсманăм!
Пăрахать те хăварать
Тепĕр юсман çул çине,
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Юсман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă хăраса,
Сиксе карĕ каялла...
— Шалт-шалт, тыллăм,
шалт тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе килет çулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Йĕрсе юрлать юррине:
— Акăр çулĕ тап-такăр,
Уйăх çути çап-çутă,
Чуп-чуп, лашам, чуп, лашам,
Çитес çĕре çит, лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе юрнă юсманăм!
Пăрахать те хăварать
Хăйĕн юлашки юсманне.
Çитнĕ-çитнĕ çĕртенех,
Юсман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă каялла
Сиксе карĕ ялалла...

* * *

Çитес çĕре çитрĕ кин,
Шаккать аппăш хапхине:
Аппам, кӳрт-ха йăмăкна,
Кӳрт-ха Чĕкеç йăмăкна,
Усал тăшман хăвалать!
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Утах хăвăн çулупа!
— Сыв пул эппин, аппамçăм!
Чĕкеç карĕ, шаккарĕ
Тепĕр аппăш хапхине:
— Аппам, кӳрт-ха йăмăкна,
Кӳрт-ха Чĕкеç йăмăкна,
Усал тăшман хăвалать!
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Каях хăвăн çулупа!

— Сыв пул эппин, аппамçăм!
Чĕкеç карĕ, шаккарĕ
Хăйĕн пиччĕш хапхине:
— Пиччем, кӳрт-ха йăмăкна,
Кӳрт-ха Чĕкеç йăмăкна,
Усал тăшман хăвалать!
— Çĕрле çӳрес хăнам çук,
Уттар хăвăн çулупа!
— Сыв пул эппин, пиччемçĕм!
Йĕре-йĕре сарă кин
Аслăк çине улăхрĕ,
Йĕре-йĕре çавăнта
Улăм ăшне пытанчĕ.

* * *

— Шалт-шалт, тыллăм,
шалт тыллăм!
Акăр çулĕпе сик, тыллăм,
Çав кин патне çит, тыллăм,
Çав кин пуçне çи, тыллăм!
Тимĕр тылă, шалт тылă,
Сиксе пырать çулпала.
Шалт-шалт сикет, шалт тăвать,
Сар кин чунне витерет...

* * *

Карчăк хапхи умĕнче
Кĕтет-кĕтет тыллине—
Çук, кăтăрнă пулмалла:
Тылли халь те таврăнмасть.
Таçта-таçта аякра
Шалт-шалт туни илтĕнет.
Аптăраса тухатмăш
Тылла чĕнме тытăнать:
— Шалт-шалт, тыллăм,
шалт тыллăм!
Ман патмалла сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!
Таçта-таçта аякра
Аçтаха пек шăхărать,
Ахăр, тылă кăтăрнă:
Темĕскерпе çапăçать.
— Шалт-шалт, тыллăм,
шалт тыллăм!
Ман патмалла сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!
Таçта-таçта аякра
Шăтăр-шăтăр илтĕнет,
Ахăр, тылă кăтăрнă:
Темĕн унта çĕмĕрет.
— Шалт-шалт, тыллăм,
шалт тыллăм!
Ман патмалла сик, тыллăм,
Ман патăма кил, тыллăм,
Мачча çине вырт, тыллăм!
Таçта-таçта аякра
Шăтăл-шатăл илтĕнет,
Ахăр, тылă кăтăрнă:
Çĕр çĕмĕрсе таврăнать...
Шалт-шалт турĕ, шалт турĕ,
Карчăк пуçĕ ялт турĕ.
Суккăрскер çул çинчен
Ĕлкĕреймерĕ пăрăнса.
Тылă пычĕ, шалтлатрĕ,
Карчăк пуçне татайрĕ.
Тухатмăшăн пырĕнчен
Юхрĕ тухрĕ хура юн...

* * *

Иртрĕ карĕ тĕттĕм çĕр,
Хуллен-хуллен сирĕлчĕ.
Сикрĕ тухрĕ çутă кун,
Çут çанталăк çутăлчĕ.
Акăр ялĕ вăраннă,
Йывăр ыйхă татăлнă.
Пурте тăвать хăй ĕçне
Ĕçчен чăваш йĕркипе:
Чĕкеç инкен пиччĕшĕ
Авă выльăх апатлать—
Хăй йăмăкин виллине
Тупать улăм ăшĕнче.
Авă пырать пĕр этем,
Арман хуçи, урампа,
Шур сухалĕ ик хăлаç,
Курпунĕ те икĕ пăт.
Туйи çине таяннă,
Хăй кăвакал пек утать,
Пысăк лавкка умĕнче
Хашăлтатса чарăнать,
Хăй çăнăхлă тумтирне
Çапкаласа мăрлатать:
— Хурлăх, хурлăх,
Михал тус!
Ман арманăм çук ĕнтĕ!

Кĕçĕр усал-тĕселсем
Шыв урапи хушшине
Çакланнă та тытăннă
Урапана çилĕпе
Çухăрттарса çавăрса

Арман чулне шăхăртма.
Эпĕ чупса тухиччен
Арманăма усалсем
Лăштăр-лаштăр ишнĕ те
Тара панă таçталла!

* * *

Пирĕн ялта чăвашсем
Тухнă тăнă урама,
Ушкăнĕпе кĕрлеççĕ
Вилнĕ карчăк тĕлĕнче.
Карчăк выртать, хускалмасть,
Таврашĕнче хура юн:

1907.

Пĕвĕ выртать пĕр çĕрте,
Пуçĕ выртать пĕр енче.
Тылă ларать, шалтлатмасть,
Мачча çинче сасă çук...
Халăх шăв-шавĕ пĕр вĕçлĕ,
Шăв-шав сăмахĕ çĕр тĕслĕ.

## ТĂЛĂХ АРĂМ

Юмах юпа тăрринче,
Хам урхамах çиййĕнче.
Вĕçсе-вĕçсе пытăм та
Килтĕм тухрăм çакăнта,
Аслă вăрçă хушшине—
Икĕ халăх вăрçнă çĕре.
Унта пĕр кун пурăнтăм,
Çак ĕçсене эп куртăм:
Асап курать çич ютра
Çичĕ тăван вăрçăра.
Хам та чăваш пуçăмпа
Часах сисрĕм чунăмпа
Вĕсем чăваш иккенне.
Ырă сунтăм вĕсене:
— Ырă чăваш тăвансем,
Пĕтчĕр сирĕн тăшмансем!
Çут хĕвелпе çут тĕнче
Вăй паччăр çак кунсенче.
Çичĕ тăван çапăçать,
Çапăçать те тытăçать.
Сăсар çĕлĕк пуçĕнче,
Шурă тумтир пĕвĕнче,
Симĕс тукмак аллинче,
Сенкер сăнă хыçĕнче.
Вĕçет кăвак урхамах
Кайăкран та хытăрах,
Вĕçет, çÿрет тăлхăрса,
Тăшман пуçне таптаса.
Вăрçă шавĕ шав кĕрлет,
Таврашри çĕр кисренет.
Çичĕ тăван çапăçать,
Çапăçать те çуй тăвать;
Тăшман пуçĕ çĕмĕрлет,
Хура юнĕ сирпĕнет.

* * *

Çавна курса тăнипе,
Хам та хытă пăхнипе,
Сехри хăпса тухнипе
Урхамахăм сикрĕ те
Илчĕ карĕ туласа,
Пĕр еннелле çавăрса.
Ырса çитсен тăтăмăр,
Унта çакна куртăмăр:
Çеçен хирте çил вылять,
Сарă ыраш хумханать,—
Сарă ыраш хумханать,
Чăваш чунне йăпатать.
Ирех тăрса пит çуса,
Ирех хырăм тăрантса,
Ертсе килет хунямăш
Çичĕ кинне тыр вырма.
Çичĕ тăван ют çĕрте,
Арăмĕсем çак хирте.
Тыр выраççĕ юрласа,
Ыраш ÿкет касăлса,
Пулать-тăрать кĕлтесем,
Кăтра пуçлă çĕмелсем.
Тыр выраççĕ юрласа,
Пĕлмеççĕ те канасса.
Темшĕн ватă карчăкăн
Ашĕ çунать паян кун.

Тыр выраççĕ юрласа,
Пĕтрĕ карчăк ыванса.
Ытла ăшĕ çуннипе
Утрĕ урапи патне,
Çичĕ кашăк ыватрĕ,
Çапла сăмах каларĕ:
— Пӳлĕх, кăтарт тĕрĕсне,
Кашăк, кала чăннине:
Хăш кин юнлă кашăклă—
Пĕтнĕ унăн упăшки.
Кашăк ӳкрĕ çавранса,
Укрĕ-тăчĕ юн тулса
Кĕçĕн кинин кашăкки,—
Пĕтнĕ иккен упăшки!

* * *

Çеçен хирпе кин пырать,
Вăрçă еннелле утать,—
Кашăк юнпа тулайрĕ,
Чăн тĕрĕсне кăтартрĕ.
Йĕре-йĕре кин пырать,
Аслă пиччĕшне курать:
— Пиччем, пиччем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
— Куртăм-ĕçке курасса:
Ларать çӳл ту куранса,
Çӳл ту çинче пӳрт ларать,
Унта шăллăм çыварать.
Тимĕр кăвак лашиччĕ,
Лаши тирĕ айĕнче,
Шурă тутăр пит çинче,
Симĕс тукмак аллинче.
Йĕре-йĕре кин каять,
Тепĕр пиччĕшне курать:
— Пиччем, пиччем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
— Куртăм-ĕçке курасса:
Ларать çӳл ту куранса,
Çӳл ту çинче пӳрт ларать,
Пӳртре шăллăм çыварать.
Тимĕр кăвак лашиччĕ,
Лаши тирĕ айĕнче,
Йĕнерĕ пуçĕ айĕнче,
Сăнни ури вĕçĕнче.
Йĕре-йĕре кин утать,
Виççĕмĕшне тĕл пулать:
— Пиччем, пиччем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
— Куртăм-ĕçке курасса:
Ларать çӳл ту куранса,
Çӳл ту çинче пӳрт ларать,
Пӳртре шăллăм çыварать.
Тимĕр кăвак лашиччĕ,
Лаши тирĕ айĕнче,
Шурă тутăр пит çинче,
Тĕттĕм каçĕ куç çинче.

* * *

Йĕре-йĕре пырать кин,
Çӳлĕ тăва курчĕ тин.
Курчĕ мĕскĕн курасса,
Ларать çӳл ту куранса,
Тĕтре çӳрет шуралса,
Çӳл ту тавра яванса.
Ылттăн хĕвел саванмасть,
Çутă куна çутатмасть:
Пĕлĕт айне пытанать,
Хăй çуттинчен вăтанать.
Çил тухать те çил каять,
Хурлăхлă юрă юрлать.
Çӳлĕ тăвăн тĕлĕпе
Çăхан карать çăварне,
Хăйĕн çивчĕ сăмсипе
Апат пурне сиснипе.
Ту тăрринче пӳрт ларать,
Чăваш хытă çыварать.
Кун килет те кун иртет,—
Чăваш хытă çыварать.
Шăппăн выртать, хускалмасть,
Ун арăмĕ хурланать.
Йĕре-йĕре хуйхăрать,
Упăшкине ыталать.
Анчах арăм йĕнине
Вăл сисес çук чĕрипе.
Ĕмĕр-ĕмĕр йĕрсен те
Чĕрĕлес çук куççульпе.
Вара тăваттăмĕш кун
Çакăнчĕ те пĕтрĕ чун,
Хăй упăшкин çӳçĕпе,
Виçĕ ылттăн пĕрчипе.
Эп те вара хурланса,
Икĕ чуна асанса,
Урхамаха вырттартăм,
Чӳклерĕм те хăвартăм.

1907.

## НАРСПИ

### I. Силпи ялĕнче

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса,
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса.
Тусем, сăртсем хуп-хура,
Юрĕ кайса пĕтнĕрен;
Тухать курăк çăп-çăра,
Хĕвел хытă хĕртнĕрен.
Сивĕ, хаяр хĕл иртет,
Каять йĕрсе, хурланса;
Сивĕ куççульпе йĕрет,
Иртнĕ куншăн хуйхăрса.
Путăксемпе, варсемпе
Çĕмĕрĕлсе шыв кĕрлет.
Анчах мĕнле йĕрсен те,
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет.
Хĕл куççулĕ шавласа
Юхса карĕ çырмара.
Ачи-пăчи выляса
Чупса çÿрет урамра.

Килчĕ ырă çуркунне,
Килчĕ ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
Хĕл ыйхинчен вăратса.
Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
Ешĕл тумтир тăхăнать.
Çеçен хир те ешерет,
Илемĕпе мухтанать;
Тĕрлĕ-тĕрлĕ чечексен
Ырă шăрши сарăлать.
Пур çĕрте те кайăксен
Лайăх юрри янăрать.
Çÿлте, пĕлĕт айĕнче,
Тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.
Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
Ача шăхличĕ калать,
Хырăмĕ пит выçнипе
Силпи ялнелле пăхать.

Силпи ялĕ пуян ял,
Ларать вăрман ăшĕнче.
Кантур пекех çурчĕсем
Ват йăмрасем айĕнче.
Ялĕ тавра укăлча,
Çĕнĕ çатан укăлча;
Кив капанлă анкарти,
Тĕрлĕ çимĕçлĕ пахча.
Аслă урам тăршшĕпе
Хăма витнĕ çурчĕсем.
Урам икĕ айккипе
Ем-ешĕлех сачĕсем.
Çуртсем тавра кил-карти
Чул хÿме пек çавăрнă.
Сарă хапха килсерен,
Чĕнтĕрленĕ тăраллă.
Силпи ялĕ аслă ял,
Хула тейĕн инçетрен.
Ахăр, кунти чăвашсен
Мулĕ пур-тăр çав вĕсен.

Çырма юхать кĕрлесе
Аслă ялăн çумĕпе,
Хĕвел, тĕрĕ тĕрлесе,
Вылять унăн шывĕпе.
Тăрă шывăн ăшĕнче
Кăвак пĕлĕт явăнать,
Ватă йăмра тайăлса
Тĕсне пăхса савăнать.
Авă кĕпер çийĕнче
Старик ларать вăлтапа:
Йăпăрт-япăрт пуллине
Улталасшăн ăманпа.
Ав ачисем çÿл енче
Шывра ишсе çÿреççĕ,
Пулă тытан ваттине
Хирĕçтерме пĕлеççĕ.
Акă пĕр çын кĕперпе
Каçса пырать çырмана;
Çырма урлă каçрĕ те
Кĕрсе карĕ вăрмана.

Çăтмах пекех туйăнать
Силпи чăваш ялĕнче.
Вăхăт иртни сисĕнмест
Савăнăçлă кунсенче:
Кайăк юрри, çын сасси
Ян-ян ярать таврана;
Çуркуннехи хавас юрă
Килсе кĕрет хăлхана.

Урам тăрăх çыннисем
Улпут пекех утаççĕ.
Пÿрт хыçĕнче шавласа
Ачи-пăчи выляççĕ.
Нар пек хитре хĕрĕсем
Акăшсем пек утаççĕ,
Чăнкăр-чăнкăр тенкисем
Йăлтăртатса пыраççĕ.
Çĕр çĕмĕрсе каччисем
Ташлать хапха умĕнче.
Пурăнăççем, ах, аван
Аслă Силпи ялĕнче!

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.
Анчах вăйлă этем те
Хăй тĕнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать.
Аслă Қалăм эрнинче
Мĕнле чăваш ĕçмен-ши!?
Тарăн нÿхреп ăшĕнче
Мĕн чул сăра пĕтмен-ши!?.
Ĕçнĕ те çав, çинĕ те,
Йĕркипеле сикнĕ те,
Унсăр пуçне еплелле
Тăвас тетĕн праçнике?
Кун иртнĕçем урамра
Ӳсĕр çынсем нумайрах;
Қаç пулнăçем вăрмана
Сасă каять хытăрах.

Ĕçе-ĕçе, каçалла
Ӳсĕр чăваш ывăнать,
Çуркуннехи пылчăк та
Қанма çемçе туйăнать.

Выртать чăваш улпут пек,
Шухăшламасть ăçтине,
Пĕтĕм урам тăршшĕне
Қăшкăрать хăй юррине:
— Нумай ĕçле, нумай çи,
Хытă тарла, хытă ĕç.
Эрех тесен, ĕç çынни
Нихăшĕ те тиркемест.
Вăхăчĕпе ĕçлĕпĕр,
Вăхăчĕпе ĕçĕпĕр.
Қилте ĕçме пулмасан,
Қÿршĕ патне кĕрĕпĕр.
Қÿршĕн ĕçме пулмасан,
Уйранне те ĕçĕпĕр.
Уйранĕ те пулмасан,
Тур парасса кĕтĕпĕр.

Калăм иртет, юр пĕтет,
Çурхи суха та çитет:
Чăваш часах урăлмасть,
Мухмăр иртсе каяймасть.
Ĕнтĕ, ÿсĕр чăвашсем,
Урăр çине тăрăр-ха!
Ем-ешĕлех çÿл тусем,
Шыв та чакнă çырмара.
Эй, пиччесем, тăрăр-ха,
Урлă-пирлĕ пăхăр-ха!
Ака-пуçне тÿрлетес,
Урапуна тирпейлес;
Сивĕ шывпа çăвăнсан,
Питне-куçна тĕс кĕтĕр;
Авантарах апатлан,
Ака тума вăй кĕтĕр.
Қÿлес ĕнтĕ лашана,
Тухса каяс акана.
Эй, турăçăм, сывлăх пар,
Акнă тыррăма ăнтар!

## 2. Сарă хĕр

**Ешĕл** курăк хушшинче
**Сап-сарă** чечек ÿсет;
**Аслă** Силпи ялĕнче
**Иерспи** ятлă хĕр ÿсет.
**Пичĕ-куçĕ пит** хÿхĕм,
**Хирти сарă чечек пек.**
**Икĕ куçĕ хуп-хура,**
**Икĕ хура шăрçа пек.**

Явăнаççĕ хыçалта
Çивĕт вĕçĕ кăтрисем.
Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем.
Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри çĕкленет,
Çÿхе тути кулнă чух
Каччă чунĕ çемçелет.

Хирти сарă чечеке
Ашă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?

---

Хĕвел анса ларсанах,
Питне çăвать, шăлăнать.
Вăййа тухма шĕлкеме
Кăкăрĕ çине çакать.
Шăнкăр-шăнкăр теветне
Хулпуççи урлă ярать,
Хĕрлĕ пурçăн тутăрне
Хĕрле çавăрса çыхать.
Вăйăсенче ун сасси
Кайăк сасси евĕрлĕ,
Ахăлтатса кулнă чух,
Çирĕп çын ку, темелле.
Вăйă саланиччен ех
Савăнтарать сассипе.
Ирхи çăлтăр хăпарса
Йăл-йăл кулать тӳпере.
Хăйĕн ашшĕ килĕнче
Нарспи канлĕ çывăрать:
Ырă тĕлĕксем курса
Тĕлĕкре те савăнать.

---

Ирех тăрать, тумланать,
Нарспи ĕçе тытăнать:
Е пурçăн çип илет те,
Юрла-юрла тĕр тăвать;
Е çĕлеме ларать те,
Çĕвви шăрçа пек пулать;
Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă
Пĕр кĕрет те, пĕр тухать;
Е пир тĕртме ларать те,
Вылянтарать ăсине;
Е хултăрчă тытать те,
Çипне тирет çĕррине;
Е сак çинчи кушакĕ
Питне çăва пуçласан,
Апат хатĕр хăнашăн,
Алли-ури çăмăлран...
Аван иртрĕ пурăнăç
Хĕрĕн çулĕ туличчен,
Ашшĕ килне хăтана
Çичĕ ютран киличчен.

---

Нарспи ашшĕ Михетер
Çĕрме пуян пурăнать.
Вăл хăй хĕрне юратать,
Нарспийĕпе мухтанать:
— Ман хĕр пекки камăн пур?
Кама пӳрнĕ ун пек хĕр?
Пушмак çук-и хĕрĕмĕн?
Çӳрет-и вăл тенкĕсĕр?
Силпи ялĕ ĕмĕрне
Ун пек хĕрсем курас çук!
Пĕр чăваш та хăй хĕрне
Михетер пек пăхас çук!
Михетере мĕн çитмен?
Мĕнĕм çук-ши çуртăмра?
Кĕмĕл тенкĕ, тĕртнĕ пир
Сахал-ши-мĕн çӳпçемре?
Тырă-пулă туллиех
Ишĕлмест-и кĕлетре?
Çу, сĕт-турăх, сăра пыл
Тулли мар-и нӳхрепре?

---

Чăн сăмахăн суйи çук:
Михетерĕн мĕн çитмест?
Пĕтĕм ялта пĕр пуян,
Ана никам çитеймест.
Унăн çурчĕ хула пек,
Кĕрсен витĕр тухма çук.
Хуралтисен тăррине
Чăх-чĕп вĕçсе çитме çук.
Картиш тулли япала
Купаланса выртаççĕ,
Кĕлет тулли тыррисем
Тăкăнас пек тăраççĕ.
Урхамах пек лашисем
Утă-сĕлĕ çиеççĕ:
Унăн выльăх-чĕрлĕхсем
Пичĕке пек çӳреççĕ.
Тури касри çак кил-çурт
Аякранах курăнать—
Пирĕн вată Михетер
Тивĕçлипе мухтанать.

---

Çак ырă çын Михетер,
Хăйĕн хĕрне юратса,
Аслă çăварни хыççăнах
Хучĕ ăна çураçса.
Пулас туя ялйышсем
Тӳсеймесĕр кĕтеççĕ:

— Икĕ пуян пĕрлешсен
Шеп те пулĕ туй!—теççĕ.
Çимĕк хăçан çитĕ-ши?
Епле вăхăт иртерес?
Çимĕк кунĕ инçе-ши?
Епле унччен тÿсес?
Михетерĕн килĕнче
Парне валли çĕлеççĕ.
Туйăн хăватне сиссе,
Вăйран тухса ĕçлеççĕ.
Анчах Нарспи, сарă хĕр,
Туй пуласран хурланать:
Вăрттăн-вăрттăн вăл йĕрет,
Сетнер ятне асăнать.
Ял вĕçĕнче, Тукасра,
Пĕчĕкçеççĕ пÿрт ларать.
Амăшĕпе çак пÿртре
Сетнер ача пурăнать.
Чипер ача Сетнерĕн
Пĕр урхамах лаши пур,
Ватă карчăк амăш пур,
Вĕри юнлă чĕри пур.
Кунĕн-çĕрĕн ĕçлеме
Икĕ вăйлă алли пур.
Тăшман пуçне пĕтерме
Вĕри вут пек çилли пур.
Унтан урăх Сетнерĕн
Нимĕн те çук япала.

(Анчах асту: Михетер
Хĕрне памасть çукалла).
Пирĕн Нарспи, сарă хĕр,
Çав Сетнере юратать,
Çавăнпала сарă хĕр
Туй пуласран хурланать.

---

Çÿлĕ валак патĕнче
Ватă йăмра ешерет.
Куллен ирех çавăнта
Сетнер Нарспие кĕтет.
Кĕте-кĕтех шăварать
Урхамах пек лашине.
Шыва анать витрепе
Нарспи куллен ирхине.
Нарспи икĕ витрепе
Шăлтăр-шăлтăр килет-çке.
Савăннипе Сетнерин
Чĕри кăлт-кăлт сикет-çке
Нарспин çÿхе тутисем
Кулаççĕ-çке таçтанах,
Çÿлĕ валак пуçĕнче
Сетнер тăрать çутăлсах.
Йăлтăр-ялтăр куçĕсем
Сар хĕр çине пăхаççĕ,
Сар майăхлă тутисем
Ăшă сăмах калаççĕ.

### 3. Çимĕк каçĕ

Шăнкăртатса шыв юхать
Çÿлĕ валак пуçĕнче;
Кĕмĕл пекех ялтăрать
Шывĕ хĕвел çуттинче.

Кĕмĕл-мерчен тухъяпа
Сарă хĕрĕ шыв ăсать,
Сарă каччă калаçса
Хăй лашине шăварать.

Сÿлĕ йăмра ăшĕнче
Кайăк юрлать юррине,
Лаши ĕçсе тăнăçем,
Каччă калать сăмахне:

— Çаплах вара, Нарспиçĕм,
Çук-шим манăн ăрăскал?
Çаплах сана ют çĕре
Илсе кайĕ-шим усал?

Ах, телейĕм çук-тăр çав,
Аçу-аннÿ пит пуян.
Хăйсен пуянлăхĕпе
Пăрăнаççĕ çук-çынран.

---

— Ан ÿпкелешсем, Сетнер,
Мĕншĕн çынна ÿпкелес?
Аçта тарса каяс-ха
Пуян атте-аннерен?
Атте-анне ухмах çав,
Мĕн каласа кăнтарас?
Мĕн тăвар-ха, кала-ха,
Мĕнле пирĕн май тупас?
Хĕвел ансан, каç пулсан,
Паян туя лартаççĕ.
Хушăлкари пуянпа
Манăн туя пуçлаççĕ.

Тăшман ытла хаяр, тет,
Епле унтан хăтăлас?
Сетнер, Сетнер, кала-ха,
Аçта каяс, мĕн тăвас?
Сана тем пек юратса,
Савса эпĕ пурăнтăм,
Анчах çапах çак куна
Çамрăк пуçăмпа куртăм.

---

— Пĕртен-пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Ватă карчăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур.
Вĕсенчен те хаклăрах—
Чунăм савни, эсĕ пур,
Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур;
Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вăйлă аллăм пур,
Анчах ăна пĕтерсен,
Унтан усал тĕнче пур.
Хăвăн кăмăлу пулсан,
Лашам çине лартăттăм,
Аяккалла ку ялтан
Вĕçĕттĕм те кайăттăм.
— Сетнер, таврăн хăвăртрах!
Шыва анать пĕр арăм...
Чун савнипе калаçса
Уйрăлассăн туймарăм.

---

Сывă пул эппин, Нарспи,
Ан ман эппин мĕскĕне!—
Лаши сикрĕ, ыткăнчĕ,
Вĕçсе карĕ килнелле.
Нарспи ăна, хурланса,
Пăхса юлчĕ хыçĕнчен,
Хускалмарĕ вырăнтан
Савни куçран кайиччен:
«Сывă пулах, сывă пул!
Епле сана манăп-ши?
Санпа пĕрле пулмасан,
Епле ютра пулăп-ши?»
— Мĕншĕн, Нарспи, хуйхăран?
Каччу ытла ватă-им?
Парнӳ ытла сахал-им?—
Терĕ арăм, çитрĕ те.
Нарспи шывне ăсрĕ те
Килне утрĕ хуйхăрса.

Килне çитрĕ, йĕрсе ячĕ
Сетнерĕшĕн хурланса.

---

Пӳртре ватă карчăкĕ
Вăрçса çӳрет ахалех.
Сиплет тулта Михетер
Туй кӳмине пĕчченех.
Ĕçлет ватă пуçĕпе,
Пурттипеле каскалать.
Савнă хĕршĕн тăрăшса
Пичĕ тăрăх тар юхать.
«Мĕн кĕçĕнрен ӳстертĕм
Çак тарана çитерме,
Ĕнтĕ паян юлашки
Ĕçĕм пултăр хĕрĕме.
Ӳссе çитрĕ, пулчĕ хĕр—
Пуян упăшка кирлĕ,
Упăшкине тупрăмăр—
Кӳми лайăхрах кирлĕ.
Çитрĕ ĕнтĕ çимĕк те,
Хĕрĕн туйне тумалла.
Тантăшăмсем пухăнсан,
Кĕçĕр туйне лартмалла».

---

Михетерĕн килĕнче
Сăра пичĕки кусать,
Ялти тантăш-тăвансен
Пырĕ тĕпĕ ярăнать.
Икĕ пысăк кăмака
Тĕрлĕ апат пăсланать,
Ялти тантăш-тăвансен
Тута-çăвар çуланать.
Хура пӳртре шăпăрçă
Ларать шăпăр тӳрлетсе.
Ялти çамрăк каччăсен
Ури каять çĕкленсе.
Туйăн хăватне кĕтсе,
Пурте вĕçсе çӳреççĕ;
Килти пĕр чун хуйхине
Пĕртте вĕсем сисмеççĕ.
Нарспи ларать лаççинче
Икерчĕсем çуласа,
Çураçнине асăнса,
Ларать мĕскĕн хуйхăрса.

---

«Çичĕ ютран килчĕ ют
Атте килне хăтана,
Сарă хĕре çураçать
Çичĕ ютри пуяна.

Атте-анне, ан васкăр,
Тата пĕр çул тăрăр-ха,
Пĕртен-пĕрех хĕрĕре
Тата пĕр çул усрăр-ха.
Атте-анне ӳсĕрпе
Хĕрне итлес темерĕ,
Каччи пуян тенипе
Хĕрин чунне пĕлмерĕ».
Ватă чун та хытă чун—
Хытса кайнă кĕççе çав.
Çамрăк чун та пĕчĕк чун—
Чунĕ ытла çемçе çав.
Кайăк чунĕ пулсассăн,
Йĕрĕччĕ те кулĕччĕ;
Çуначĕсем пулсассăн,
Вĕçĕччĕ те кайĕччĕ.

Хĕвел анчĕ хĕрелсе
Хура вăрман хыçнелле.
Кĕтӳ анчĕ кĕрлесе
Аслă Силпи ялнелле.
Ав унта хитре хĕрсем
Ĕни хыççăн чупаççĕ;
Чее маттур каччисем
Вĕсем хыççăн юлмаççĕ.
Акă пĕр этем чупать,
*Ула* ĕни мĕкĕрет,
Сĕмсĕр сысни çухăрать,
Пĕтĕм яла çĕмĕрет.
Кĕтӳ хыççăн урампа
Хура тусан хăпарать.
Акă тусан ăшĕнче
Карчăк аран çеç утать.
Ай-хай хĕн пек çĕклесси,
Ай-хай çăмăл ĕçесси!
Йăтнă сăра чĕресси
Хăй вăл хăрах аллипе.

Пирĕн ватă Михетер
Тантăшсене йыхăрать:
Унăн ватă карчăкки
Сăра йăтнă, уттарать.
Тантăш патне кĕрет те
Уçать сăра чĕресне.
Туя пыма йыхăрса,
Ĕçтерет туй сăрине:
— Ырă тантăш-тăвансем!
Пире хисеп тумăр-ши?
Хĕре качча паратпăр,
Тури касса утмăр-ши?
— Пырăпăрах, пырăпăр,
Пымасăрах юлмăпăр!
Турă пӳрсен, сыв пулсан,
Кăмăлăра татмăпăр!—
Карчăк яла ĕретлет,
Тĕттĕм те пулса çитет.
Карчăк çӳрет килĕнче,
Çăкăр-тăвар хатĕрлет.

— Ырă тантăш-тăвансем,
Тури касса уттарар!
Перекетлĕ сăрана
Ĕçе-ĕçе туй лартар!
Пирĕн тăван хĕр парать,
Пире унта йыхăрать.
Хăйĕн савнă хĕрĕшĕн
Урăм-сурăм туй пуçлать.
Туйне-пуçне пуçличчен,
Авал чăваш йăлипе,
Ваттисене асăнса,
Тăкар çăкăр-тăварне:
Ват аттесем, аннесем,
Ырă курăр çăтмахра,
Пирĕн çăкăр-тăварсем
Пулччăр сирĕн умăрта.
Пирĕн савнă Нарспие
Парăр ырă пурăнăç,
Парăр унăн телейне
Ырăлăхпа савăнăç!—

Ваттисене асăнчĕç
Авалхисен йĕркипе.
Унтан туя пуçлама
Кĕчĕç шурă кĕлете.
Курка тулли сăрипе
Ашшĕ-амăш пехиллет,
Ашшĕ-амăш умĕнче
Хĕрĕ хурланса йĕрет.
— Нарспи, хĕрĕм, пил сана!
Упăшкуна ан пăрах,
Аван пурăн унпала,
Тату пулăр яланах.
Итле ăна, йăваш пул,
Усал çынпа ан çыхлан,
Ĕçне ĕçле, ĕçчен пул,
Кирлĕ марпа ан хăтлан!—
Атте-анне ӳкĕтлет,
Хĕр куççульне юхтарса.

Шăпăр сасси чăйлатать,—
Туя ячĕç пуçласа.

---

Силпи ялĕ харлатса,
Вилнĕ çын пек, сывăрать.
Тĕнче лăпкине курса,
Çӳлте уйăх савăнать.
Кĕрсе пĕтнĕ вăйăран
Сарă хĕрсем, каччăсем,
Туй халăхĕ çывăрать,
Çывăраççĕ хуçисем.

Хĕвел тухнă-тухманах
Тĕтĕм карĕ ял çинче.
Куçне уçнă-уçманах
Чăваш ларать мунчинче.
Çимĕк кунĕ йăлипе
Çынсем мунча кĕреççĕ,
Çимĕк курăкĕпеле
Çан-çурăмне хĕртеççĕ.
(Ват аттесем, аннесем
Çапла хушса хăварнă).
Çапла паян чăвашсем
Мунча кĕрсе тасалнă.
Çĕнĕ кĕпе-йĕмпеле
Тухрĕç вĕсем урама,
Тухрĕç вĕсем ерипе,
Утрĕç ирех туй курма.
— Акă туй та çакă туй,
Пирĕн туйсем çаплалла!—
Тури касри туй сасси
Янтăрататть çур яла.

---

Ирхетерĕн кил-çурчĕ
Аякранах курăнать.
Урам енчи хапхаран
Çын кĕрет те çын тухать.
Пӳрт умĕнче çын нумай:
Кӳлнĕ вĕсем туй курма.
Еттисем те сахал мар:
Кӳлнĕ вĕсем сăра ĕçме.
Явантарса явăнса
Шăпăр кĕвви ташлатать.
Ыра хуçа хушнипе
Т[illegible] халăхĕ туй тăвать.
Т[illegible] халăхĕ туй туса
Ăшă сывлăш сивĕнет.
Сасă-чĕвĕ илтĕнмест;
Пĕр йытă çеç вĕркелет,
Çăвар карма ӳркенмест.
Автан çурçĕр авăтать,
Ларнă çĕрте çывăрать.
Хуллен-хуллен уйăх та
Вăрман хыçне пытанать.
Ырă тутлă ыйхăпа
Чăваш çынни çывăрать.
Пĕр чунăн çеç хуйхăпа
Çав каç чĕри çурăлать.

## 4. Туй

Ывăнать те савăнать.
Шăпăр сасси чарăнсан,
Туй юррийĕ пуçланать:
— Мĕншĕн шăппăн ларатăр,
Мĕншĕн шăппăн ларатăр?
Шăппăн-шăппăн лармашкăн
Шăпчăк чĕппи мар эпир!—

---

Анчах шăпăр хăлăхсăр:
Татах ташлама сĕнет.
Кĕрĕс-кĕрĕс ташласа
Пӳрт урайĕ силленет.
Ыр хăнасем тĕпелте
Ĕçсе-çисе савнаççĕ,
Хĕрĕпеле каччине
Ырă кунсем сунаççĕ:
— Сывă пулччăр, пур пулччăр,
Ача-пăчаллă пулччăр;
Ырă-тату пурăнччăр,
Усал сăмах ан илтчĕр.
Ĕçĕр-çийĕр, тăвансем,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар!
Хĕрпе качча юратса,
Айтăр шепрех туй тăвар!—
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ,
Епле ташлать ват хуçа!
Хĕрин туйин савнăçĕ
Çĕклет иккен ват пуçа!

---

Маттур пуса-каччисем
Вăйран тухса сикеççĕ.
Вĕсен хыççăн хĕрĕсем
Такмакĕпе сĕтеççĕ...

Пурçăн çӳçеллĕ чаршав
Маччаранах сулланать.
Хĕрлĕ чаршав хыçĕнче
Пĕркенчĕкпе хĕр ларать.
Хĕр ларать те, хĕр йĕрет,
Пĕркенчĕкне çĕклемест.
Хĕр-çуммисем юрласа
Унăн сасси илтĕнмест.
Хĕр-çуммисем юрринче
Асăнаççĕ Нарспие,
Михетерĕн Нарспине—
Тăваççĕ мĕн ун туйне.
Шурă сухал Тăхтаман
Упăшкийĕ пулмалла.
Хăйĕн чунĕ савнинчен
Каймаллипех каймалла.
Эсĕ юта кайсассăн,
Мĕн тăвĕ-ши Сетнерӳ?
Ырă Нарспи, аппаçăм,
Ăçта санăн телейӳ?

Туй тăваççĕ çĕмĕрсе,
Унăн вĕçĕ-хĕрри çук.
Тантăш патне çӳресе,
Ялта тантăш пĕтес çук.
Çӳлĕ сăран кӳмийĕ
Тантăш патне çӳретет.
Хĕр-çуммисен юррийĕ
Таçта çитех илтĕнет.
Кунĕн-çĕрĕн выляма
Шăпăрĕ те чарăнмасть,
Кунĕн-çĕрĕн ташлама
Пуса-каччи ывăнмасть.
Пĕтĕм ялти ача-пăча
Туйĕ хыççăн хăвалать.
Вилес пекех, ватă çын
Пӳрт хыçĕнче сывăрать.
Туй тăвăр та шеп тăвăр,
Ватă çыннăн халĕ çук,
Выртнă çĕрте сиккелет,
Анчах тăма вăйĕ çук.

## 5. Юмăç патĕнче

Пĕчĕкçеççĕ хура пӳрт,
Шурă старик сак çинче;
Çутă кӳртмест нимĕн те
Тĕнĕ пек çеç чӳрече.
Уçса хунă алăк çеç
Пӳртĕн ăшне çутатать,
Хĕвел çутти пайăрки
Урай тăрăх ав шăвать.
Ларать старик тĕпелте
Çăпатине сапласа,
Ват ал-ура йĕркипе
Мĕшĕл-мĕшĕл маташса.
Акă хĕвел çуттийĕ
Шуса-шуса пычĕ те,
Сиксе ларчĕ старикĕн
Кăвак çӳçлĕ пуç çине.
Çимĕк çуйĕ урамран
Çĕклентерет чĕрине,
Хĕвелĕ те выляса
Çутатать çӳç пĕрчине.

---

Мăкăртатса, мăшлатса,
Çăпатине сапласа
Ларнă çĕрте, сисмен те,
Çын килнине пĕлмен те:

Уçă алăк умĕнче
Карчăк тăра парать-мĕн,
Кăвак çӳçлĕ старике
Ăшă сăмах калать-мĕн.
Ăшă сăмах калакан
Сетнер амăш пулнă-мĕн.
Ун ывăлне, Сетнере,
Усал-тĕсел ернĕ-мĕн.
Çавăнпала амăшĕ
Юмăç патне уттарчĕ,
Ах-ахлатса хуйхăрса,
Хăй хуйхине каларĕ.
Нумай вĕсем старикпе
Ларчĕç сăмах калаçса,
Калаçнă чух хушăран
Ĕлĕкхине асăнса.

---

Юлашкинчен тин вара
Килĕшрĕ леш старикки—
Мăшăр чăлха, пĕр кĕпе
Пама пулчĕ карчăкки.
Вара старик тăчĕ те,
Хăйĕн ĕçне пăрахса,
Хупса хучĕ алăкне
Турчăкипе çаклатса;

Ҫине кĕрĕк тăхăнса,
Ҫĕлĕк тытрĕ хул айне;
Ури айне шăрт хурса,
Укҫа хучĕ хăй умне;
Унтан шурă сухалне,
Кăвак ҫӳҫне якатса,
Укҫа ҫине, суккăрскер,
Пăхрĕ куҫне чакăртса.
Пăхса тăчĕ-тăчĕ те,
Шур сухалне якатса,
Каларĕ вăл еррипе
Карчăк енне ҫаврăнса:
«Ҫамки шăтăк—хупăнмĕ,
Чĕри татăк—сыпăнмĕ.
Пӳлĕх тури пӳрнинчен
Нимĕнпе те иртеймĕ.
Панă ăна пӳлĕхҫĕ
Вĕри юнпа ҫемҫе чун.
Пӳрнĕ ăна пӳлĕхҫĕ
Кĕске ĕмĕр, йывăр кун.
Сивĕ кунсем килĕҫ те,
Шăнса кайĕ вĕри юн.
Хытă кунсем килĕҫ те,
Хытса кайĕ ҫемҫе чун.
Вĕри кунсем килĕҫ те,
Вĕриленĕ шăннă юн,
Хытнă ҫĕртен ирĕлсе,
Ҫунса кайĕ ҫемҫе чун».
Унтан старик чарăнса
Шухăшласа тăчĕ те,
Кĕрĕкĕпе ҫĕлĕкне
Сакки ҫине хучĕ те,
Ҫапла татах каларĕ,
Карчăк енне ҫаврăнса
(Ларать карчăк сак ҫинче
Урлă-пирлĕ тайăлса):
«Тĕрлĕ усал-тĕсел мар,
Киреметри хывни мар,
Чир-чĕр ертен йĕрĕх мар,
Ҫын тухатса хуни мар.
Ҫук, кин, санăн ывăлна
Турă ҫырнă ҫаплалла.
Ан йĕр, кинĕм, пӳлĕхҫе
Епле хирĕҫ пымалла?»
Старик ҫапла каларĕ,
Нимĕн тума пĕлмерĕ,
Хăйĕн ĕҫне тытрĕ те
Пĕр сăмах та чĕнмерĕ.
Пуҫне усса, хурланса
Тухса карĕ карчăкĕ.
Ҫăпатине сапласа
Ларса юлчĕ старикĕ.
Măкăртатса, мăшлатса,
Антăраса ларать вăл:
«Мĕнле вара ку паян?»
Хăй ăшĕнче ыйтать вăл:
«Халичченех сынсене
Юмăҫ пăхса параттăм,
Суя сăмах суяйса
Улталаса яраттăм—
Мĕнле вара ку паян?
Чĕре чăнах пĕлчĕ-шим?
Суйса парас тенĕччĕ—
Ак тамаша! тĕрĕс-шим?»

## 6. Тарни

Хĕвел анса пытанать,
Сывпи ялĕ лăпланать.
Тĕттĕм пулса ҫитеспе
Пирĕн туй та саланать.

Ялти хĕрсем, каччăсем
Вăййа тухнă выляма.
Тухнă пирĕн Нарспи те
Хĕр ĕмĕрне ăсатма:

«Юлашки каҫ выляса
Юрас, арăм пуличчен.
Юлашки каҫ Сетнере
Курас, юта кайиччен».

Сетнер тăрать ҫавăнтах
Пуҫне усса хуйхăрса.
Сарă хĕрĕн куҫĕнчен
Ачать куҫҫулĕ юхса.
Вăйă ҫынни салансан,
Пайтах вĕсем калаҫрĕҫ,
Ыталаса пĕр-пĕрне
Тĕттĕм ҫĕрте ҫухалчĕҫ.

Вĕт ҫăлтăрсем тахҫанах
Пĕлĕт айне хупланчĕҫ.
Вăрман тĕлне хуп-хурах
Сĕм пĕлĕтсем капланчĕҫ.

Çӑмӑр çӑвать, шыв юхать,
Хура вӑрман кӗр-кӗрлет.
Çил тухать те çил каять,
Выçӑ кашкӑр пек улать.
Çиçӗм пӗрмай çуттипе
Вӑрман ӑшне çутатать.
Тӗттӗм вӑрман ӑшӗпе
Пӗр юланут кустарать.
Лаша пырать тӑлхӑрса,
*Вӑрман ӑшне янтратса.*
Иккӗн ларнӑ утланса,
Лаша çитет ывӑнса.
Йывӑç ларать улӑп пек
Тӗттӗм çӗрте кашласа:
— Чипер кайӑр!—теет те,
Пуçне таять çул парса.

---

Çурӑмпуçӗ çап-çутах,
Хӗвел тухас пек тӑрать.
Çурӑмпуçӗ шурсанах,
Туй халӑхӗ пухӑнать.
Хӑй йӗркипе ташлама
Вӑхӑт пуса-каччисен;
Хӑй йӗркипе юрлама
Вӑхӑт çитнӗ хӗр-çумсен.
Шӑпӑр сасси илтӗнмест,
Шӑпӑрçи те курӑнмасть.
Ырӑ хӑна хушшинче
Эрех-сӑра тӑкӑнмасть.
Стариккипе карчӑкки
Хура пӳртре вӑрçаççӗ.
Мӗн пулнӑ-ши çав тӗрлех—
Пурте шӑппӑн лараççӗ?
Шӑппӑн-шӑппӑн лармасӑр:
Вӗсен хӗрӗ çук паян;
Нарспи усал Сетнерпе
Тарса кайнӑ вӑйӑран.

---

Виç юланут вӑрманта
Йӗр йӗрлесе çӳреççӗ.
Пӗри кунта, леш унта,
Темӗнле йӗр йӗрлеççӗ.
Йӗр йӗрлеççӗ, итлеççӗ:
Пӗрер сасӑ пулмӗ-ши?
Хӗвел тухать çутатса—
Кӗрлӗ çула усмӗ-ши?
Анчах нимӗн паллӑ мар,
Керес тата шаларах.

Вӑрçас килет çиллипе:
— Тупасчӗ-çке хӑвӑртрах!
Вӑрман çӑра, пит тискер!
Унӑн ӑшӗ чӑв та чав!
Йӗр ниçта та паллӑ мар,
Ниçта кайма аптӑрав!—
Виç юланут вӑрманта
Йӗр йӗрлесе çӳреççӗ.
Пӗри кунта, леш унта,
*Темӗнле йӗр йӗрлеççӗ.*

---

Сетнер тутлӑ çывӑрать
Çӳлӗ юман кутӗнче,
Нарспи ларать тӗлӗрсе
Сетнер пуçӗ вӗçӗнче.
Нарспи тӗлӗк тӗлленет:
Ашшӗ йытӑ пулнӑ та,
Шӑлӗсемпе шаккаса
Сиксе çӳрет вӑрманта:
«Ăçта тартӑн, усал хӗр?
Пуçна çийӗп тупӑнсан!»—
Йытӑ ури айӗнче
Шатӑртатать сӗм вӑрман.
Çывӑх, çывӑх, ак çитет!
Нарспи йӑлтах вӑранать.
Пӑхать: хӑйӗн патнелле
Виç юланут кустарать:
— Сетнер, Сетнер! Тытрӗç-çке!
Тӑр, тӑр! тарса хӑтӑлар!
Ай, пӗтрӗмӗр, пӗтрӗмӗр,
Ăçта тарса пытанар?—

---

Маттур шӑпӑрçӑ паян
Икӗ пуса-каччипе
Тытса килчӗ вӑрмантан
Сетнерпеле Нарспие.
Карчӑк вӗçсе тухрӗ те,
Çӳçрен яврӗ Нарспине.
Старик чупса тухрӗ те,
Чышкӑ пачӗ Сетнерне.
— Эй, аннеçӗм, аннеçӗм,
Мана çӳçрен ан сӗтӗр,
Мана апла вӗрентсе,
Манран ырӑ ан кӗтӗр.
— Эй, Михетер асатте,
Хӗненипе усси çук.
Эсӗ мана хӗнесе
Кӗлрен вутӑ тӑвас çук!

Урнă йытă Михетер,
Хăй саламат йатрĕ те,
Тытăнчĕ-çке тулама
Çыхса хунă Сетнере.

---

Карташĕнче çын нумай—
Туйне курма килнĕ пек.
Хура тăпра çийĕнче
Выртать Сетнер вилнĕ пек.
Амăшĕ те çавăнтах
Тăрать йĕрсе, ылханса,
Ярать ăнсăр ывăлне
Икĕ çынна йăттарса.
Хура пўртре Нарспинне
Питне-куçне çăваççĕ,
Татах пĕркенчĕк айне
Чаршав хыçне лартаççĕ.
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк,
Атьăр шепрех туй тăвар!
Анчах хальхи ĕç çинчен
Çĕн кĕрĕве калас мар!
Акă туй та, çакă туй,
Пысăк туй та, пăсăк туй!

## 7. Икĕ туй

Çуркуннехи вут хĕвел
Каç еннелле сулăнать.
Ял вĕçĕнчи сĕм вăрман
Тсмĕншĕн пит янăрать.
Халăх кĕтет тахçанах
Анат хапха патĕнче.
Туй килнине çавăнтах
Систерчĕçĕ евĕче.
Кĕпĕр-кĕпĕр сиктерсе
Килсе тухрĕ вăрмантан
Ыттисенчен маларах
Çĕнĕ кĕрў Тăхтаман.
Лаптак сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çўçпе сар сухал.
Лаши вĕçсе пырупа
Пичĕ-куçĕ пит усал.
Хура сăкман, сар çĕлĕк
Çамки çинче тенкĕпе.
Шурă чăлха-çăпата
Пит килĕшет кĕрĕве.

---

Арçын туйĕ юрласа
Урам тăрах уттарать.
Ырă евчĕ [illegible]
Уçлать те [illegible]
Хĕр туйĕ те [illegible]
Хирĕç [illegible] çемĕрсе.
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
[illegible]
— Эй, аттеçĕм, аннеçĕм.
Мĕншĕн çирĕр хĕр пуçне,
Мĕншĕн патăр хĕрĕре
Çичĕ ютăн аллине?
Эй, каччăçăм Тăхтаман,
Манпа ырă курас çук.
Эпĕ, чунăм пĕтсен те,
Санпа пĕрле пулас çук!

---

Ырă евчĕ сăрапа
Туя хирĕç вăл тухать.
Хушăлкасен мăн кĕрў
Хăй такмакне вăл калать.
Хăй аллинчи сăрана
Тăка-тăка çаптарать.
Хура лаша тĕк тăмасть—
Çĕнĕ кĕрў сунтарать.
Çĕнĕ кĕрў çумĕнче
Çичĕ юланут ташлать,
Пĕтĕм яла çĕмĕрсе,
Çăвар карса антăхать.
Çĕнĕ хапха айĕнчен
Кĕрсе пĕтмест урапа,
Хапха тăрри шатлатать
Саламатпа çапупа...
Ырă евчĕ килĕнче
Туйне турĕç ытлашши.
Тепер кунне урамра
Турĕç ялта вăй-килли.

---

Турĕç туя виçĕ кун
Хушăлкари хăтасем,

Анчах кайма тепӗр кун
Вăхăт, теççĕ хăнасем.
Арçын туйĕ пухăнать,
Хушăлкана каяс тет:
— Кунта туя турăмăр,
Ĕнтĕ киле каяс, тет.
— Анваскăр-ха, хăтасем,
Тепĕр киле каяр-ха,
Халех киле кайиччен,
Туя шепрех тăвар-ха!
Татах тепĕр тапхăрне
Туйне турĕç çунтарса.
Юлашкинчен хăтасен
Халĕ пĕтрĕ туй туса.
Арçын туйĕ пухăнса
Килне кайма хускалчĕ.
Каян туя ăсатма
Пĕтĕм Силпи пухăнчĕ.

---

Аслă масар тĕлĕнче
Туй лашисем тăраççĕ.
Хĕрĕн туйне ăсатма
Ашшĕ-амăш пыраççĕ.
Туйĕ тавра ялйышсем
Кĕпĕртетсе тăраççĕ;
Ваттисене асăнсан,
Хĕр кайнине сăнаççĕ.
Чирлĕ Сетнер çавăнтах
Тăрать хайĕн амăшпе,
Чун савнине, Нарспине,
Шырать чирлĕ куçĕпе.
Михетерпе карчăкки
Пехиллерĕç хăй хĕрне,
Мĕнпур тантăша йĕртсе
Тăкрĕç ăшă куççульне.
Савнă хĕрне сăмах та
Каламарĕç намăсшăн:
Сетнерпеле вăрмана
Намăс туса тарнăшăн.
Пехиллесен, мĕн тусан,
Карĕ туйĕ хускалса.
Сетнер çине пăхрĕ те,
Нарспи карĕ макăрса.
Туй кайсассăн тахçанччен
Янтăрарĕ сĕм вăрман.
Ялйыш утрĕ килнелле
Туйĕ куçран çухалсан.
Амăшĕпе Сетнер те
Килне утрĕç хуйхăрса,
Чун савнинчен ĕмĕрех
Ячĕç ăна уйăрса:
— Эх, пурăнăç, пурăнăç!
Вилме анчах юлчĕ çав,
Эх, пурăнăç, Нарспи те
Çичĕ юта карĕ çав.
Унсăр пуçне мĕн тăвас
Ăрăскалсăр пуçăмпа?
Аçта кайса кĕрес-ха
Хамăн усал хуйхăмпа?—

---

Нарспи карĕ ют яла,
Сетнер утрĕ хăй килне.
Икĕ чун та, савнă чун,
Çĕнеймерĕç тăшманне.
Икĕ савни тарнине
Хуплаймарĕ сĕм вăрман.
Сарă хĕре Нарспие
Илчĕ-илчех Тăхтаман.
Тăрса юлчĕ кăлăхах
Сетнер çавтер чун савни.
Турă çырни ахăрах,
Çапла-тăр çав самани.
Ялта нумай ун çинчен
Урлă-пирлĕ калаçрĕç,
Темтĕр аслă çынсем те
Кутне-пуçне тупмарĕç.
Нарспи карĕ ют çĕре,
Сетнер юлчĕ кăлăхах.
Ашшĕ çирĕ хăй хĕрнех,
Тăван çирĕ тăванах.

## 8. Хушăлкара

**Хушăлкара туй иккен,**
**Туйĕ ытла шеп иккен.**
**Шур сухаллă Тăхтаман**
**Туйне тăвать, тет, иккен.**
**Чипер каччă Тăхтаман**
Силпи хĕрне çаклатнă,
Çавтер аван мăшăра
Урăм-сурăм туй лартнă.
Туй тăваççĕ ташласа
Çамрăк пуса-каччисем.

Туй юррисем юрласа
Ыванаççĕ çăварсем.
Ĕнер Силпи ялĕнчен
Туйĕ килчĕ таврănса,
Паян кĕрÿ хĕр туйне
Кĕтет хĕрÿ туй туса.
Паян, хĕр туйĕ килсен,
Каçпа хĕве хупмалла,
Ыран ирех тăмалла,
Хĕртен арăм тумалла.

---

Аслă ял та Хушăлка,
Икĕ тăвăн хушшинче.
Туйне туса, Тăхтаман
Ларать сĕтел хушшинче.
Тĕрлĕ апат айĕнче
Çăка сĕтел авăнать.
Ўсĕр кĕрÿ пуçĕнче
Тĕнче вăр-вăр çаврăнать.
Тулта хĕвел çутатать,
Кăнтăрлана сулăнать;
Кĕрÿ пуçĕ ÿсĕрпе
Аялалла усăнать.
Çеçен хирте путене,
Вăхăт-вăхăт вăл юрлать;
Туй килмест-и-ха тесе,
Текех кĕрÿ йĕтетет.
Кĕрÿ çинчи шур кĕпен
Арки вăр-вăр тăвать-çке.
Туя кĕтсе, ват пуçăн
Чунĕ вăр-вăр тăвать-çке.

---

Шăнкăр-шăнкăр шăнкăрав
Шăнкăртатать çулпала:
Хĕр туй килет çĕмĕрсе
Урам тăрăх ялпала.
Вунă арăм хушпупа
Сăран кÿме çиййĕнче,
Хĕрĕх виçĕ урапа
Сăран кÿме хыçĕнче.
Çичĕ çĕрте урамра
Чарăнчĕç туй çыннисем:
Хирĕç тухрĕç сăрапа
Хушăлкари тантăшсем.
Юрлаççĕ те кĕреççĕ
Ырă кĕрÿ хапхинчен,
Ĕçеççĕ те çиеççĕ
Инçе çулсем хыçĕнчен.

Кăнтăрла та çитмен-ха,
Каçчен вăхăт нумай-ха,
Каç пуличчен туй тума
Пире вăхăт нумай-ха.

---

Шыв-шур пуçĕ пуçласан,
Тĕттĕмчченех сикрĕç те,
Тăхтаманпа Нарспие
Хĕве хупрĕç кĕлете.
Аслă çынсем уçăпах
Питĕрчĕç туй кĕлетне.
Йăл-йăл кула-кула çеç
Кĕрсе карĕç пÿртнелле.
Акă каччă, пĕр каччă,
Кĕлет тавра явăнать.
Те итлеме, те пăхма
Пушă вырăн вăл шырать.
Тăват-пилĕк ача-пăча
Явăнаççĕ çавăнтах:
Ай, намăссăр ача-пăча!
Мĕн кирлиех пур унта?!
Анчах акă итлеççĕ,
Илтĕнет те пулмалла;
Ав усалсем лăпланчĕç:
Хĕр калаçать, ан шавла!

Шалта Нарспи темĕскер
Тăхтамана каларĕ,
Анчах хуллен сăмахне
Пĕртте илтсе пулмарĕ.
— Асту, Нарспи, йĕвенÿ
Ман алăра малашне,—
Терĕ хытах Тăхтаман,
Чараймасăр çиллине.
— Туйна анчах ăсатам,
Унта мана пĕлĕн-çке:
Мĕн пуласне пĕлме çук—
Ху курасне курăн-çке...
Урăх нимĕн илтĕнмест,
Пĕр сăмах та чĕнмерĕç.
Итлекенсем кĕтсен те,
Пĕр сăмах та илтмерĕç.
Ачи-пăчи çавăнтах
Ашшĕ килне чупаççĕ.
Илтни çинчен çав хутрах
Ялта сăмах сараççĕ.
Илтеӊ-тăран сар каччă
Вăрманалла уттарчĕ,

Хăлха илтнĕ сăмаха
Хай ăшĕнче пытарчĕ.
Ун çилĕллĕ куçĕнчен
Йăлтăр-ялтăр вут карĕ.
Кĕрен-тухан ялти çын
Каччă çине пăхмарĕ.
Юман анчах вăрманта
Хай кўршине систерчĕ:
Çав вăрмана кĕнĕ çын
Пирĕн тăван Сетнерччĕ.

---

Пўртре сĕтел çиййĕнче
Пăтă пăсне кăларать:
Çĕнĕ кĕрў Тăхтаман
Хăнасене ăсатать.
Ырă кĕрў Тăхтаман,
Туй пăттипе сăйласа,
Туй халăхне пуç таять,
Çапла сăмах каласа:
— Ан ўпкелĕр, хăтасем,
Сăйăм питех нумай мар.
Ĕçĕр-çиййĕр, тăвансем,
Ĕмĕр пĕрле пурăнар...
Виле-ўсĕр хăтасем
Урăм-сурăм кĕрлеççĕ.
Виле-ўсĕр пулсан та,
Мĕн каласне пĕлеççĕ:
—Эй, кĕрўçĕм Тăхтаман,
Сана ўпкев çук пиртен.
Пирĕн хĕре хытă пăх,
Тату пулăр виличчен.—
Карташĕнче лашасем
Тăраççĕ-çке ташласа.
Тухса карĕç хăтасем
Ырă юрă юрласа:
«Атьăр каяр çулпала
Курка тулли пылпала...»
Урăписен хыçĕнчен
Тусан карĕ çулпала.
Ав шăнкăрав янăрать,
Силпинелле чуптарать.
Лаша чупать пуç ухса,
Ўсĕр хуçи хăвалать.
Туй пĕтрĕ те, туй каять,
Такăр çулпа чуптарать,
Пĕрер ватти тĕл пулсан:
— Тавсси, тавсси!—кăшкăрать.

Каян туйăн сассине
Нарспи юлчĕ итлесе.
Таçта-таçта инçетре
Тусан карĕ çĕкленсе.

## 9. Çимĕк иртсен

Иртрĕ Çимĕк, иртрĕ туй,
Иртрĕ туйри савăнăç.
Карĕ пĕр пек тăсăлса
Кунран-кунах пурăнăç.
Хирте ака айĕнче
Çерем лап-лап касăлать.
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи чунĕ касăлать.
Хирте çава айĕнче
Курăк вăш-вăш йăванать.
Усал хуйхă-суйхăран
Нарспи пуçĕ усăнать.
Куллен-кунах тĕнчене
Хĕвел хĕртнĕçем хĕртет;
Хуйхă-суйхă кунран-кун
Нарспи чĕрине çиет.
Куллен-кунах садамат
Анать-ĕçке пăтаран;
Хытă тытать пулмалла
Хай арăмне Тăхтаман.

---

Чипер ача Сентти пур,
Чупса çўрет урамра.
Кĕвентине утланса,
Ача вылять лашалла.
Аслă урам тăршшĕпе
Чиксĕр тусан кăларать,
Хура чикан пек хура
Каçпа килне таврăнать.
Чипер ача Сентти пур,
Чупса килет лашипе,
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
Пакăлтатать инкĕшпе.
Çĕнĕ çын та Нарспи кин
Пĕрмаях вăл хуйхăрать,
Пăяхăшин ачине,
Сенттие, çеç юратать.

Çĕнĕ çын та Нарспи кин
Пĕрмаях вăл хуйхăрать,
Сентгипе çеç калаçса
Хăй хуйхине пусарать.

---

Çавтер ырă ачана
Турă чунне панă çав,
Кулса сиксе выляма
Кайăк чунĕ янă çав.
Çичĕ çулхи ачара
Чăваш чунĕ ларать çав:
Пĕчĕк куçĕ йĕрсен те,
Йăваш тути кулать çав.
Чипер ача Сентти пур,
Инкĕш патне ăнтăлать;
Хăйĕн пĕчĕк чĕлхипе
Инкĕшне вăл йăпататть:
— Ан йĕр, инкем, ан йĕрсем,
Тутăрупа шăл куçна.
Ан хуйхăрсам, инкеçĕм,
Хăваласам хуйхăна.

---

Ырă кĕрӳ Тăхтаман
Туй кĕлетне астăвать:
Куллен-кунах арăмне
Саламатпа кастарать.
Мĕскĕн арăмĕ тӳсет
Асапсене чĕнмесĕр.
Ухмах упăшка хĕнет
Мĕн пуласне пĕлмесĕр.
Пĕрре пĕр çын килчĕ те,
Тăхтаманпа калаçрĕç,
Нарспи пӳртре çук чухне
Пăшăл-пăшăл калаçрĕç.
Нарспи кĕчĕ сăрапа,
Леш хăнана ĕçтерет.
Хăна тухса кайсанах,
Саламачĕ вĕрентет:
— Эсĕ апла хĕр иккен,
Эсĕ апла Сетнерпе
Тарнă-мĕн-ха вăрмана
Туйна тунă çĕртенех!—
Хĕнет, хĕнет Тăхтаман,
Тĕрлĕ асап кăтартать.
Ялти çынсем хушшинче
Текех сăмах сарăлать.
Çапли-капли çавă çав:
Ун пек нумай тĕнчере
Чылай усал ĕç пулать,
Вăрттăн çĕрте, тĕттĕмре.
Атте-анне хăй хĕрне
Юратса çеç ӳстерет.
Хĕртен арăм пулсассăн,
Ват упăшка кӳлешет.
Тупрĕ пуян упăшка
Атте-анне хăй хĕрне,
Анчах унта мĕн усси—
Юратмасан пĕр-пĕрне?
Тату, ырă, килĕшсе
Иккĕш пĕрле пурăнсан,
Çĕр хут ытла телейлĕ
Ырă çын та пуянран...
Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Чунне кăлар унăнне!
Асаплантар, Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!
Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Санран çамрăк ан култăр!
Асаплантар, Тăхтаман,
Нарспи часрах ватăлтăр!
Анчах кайран хăвăнах
Ӳкĕнмелле ан пултăр.
Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Санран çамрăк ан култăр!
Иртсе карĕ виç эрне
Çимĕк эрни хыçĕнчен,
Ват упăшка хĕснине
Нарспи тӳсрĕ çавăнччен.
Анчах тепĕр эрнинче,
Пĕрре уяр ырă кас...
(Чим-ха, кăна калама
Вăхăтсăрах юрамасть.)

## 10. Нарспи ĕçĕ

Хĕвел тухать, улăхать
Çӳлĕ тусем тăррине,
Хăй çуттипе ăшăтать
Таçти-таçти çĕрсене.
Çак çуллахи ырă кун
Хушăлкана та савать.
Пур тĕнчери чĕрĕ чун
Ташлать, сикет, савăнать.

Ячӗҫ юрӑ юрласа
Сӗм вӑрманти кайӑксем,
Акӑшсем пек ярӑнса
Анчӗҫ шыва сар хӗрсем,
Анчах акӑ шурӑ пӳрт,
Пӗр сасӑ та илтӗнмест.
Шурӑ пӳртре ҫӗнӗ ҫын
Ларать, пуҫне ҫӗклемест.
Ирех хырӑм тӑрантса
Карӗ хире Тӑхтаман.
Пуҫне чиксе хуйхӑрса
Ларать арӑмӗ паян:
— Арӑм пултӑм ирӗксӗр
Атте-анне хушнипе.
Анчах хӗрӗр, мӗскӗнӗр,
Ырӑ курмасть каччипе.
Хӗрхенмесӗр хӗрӗре
Ҫичӗ ютӑн аллине,
Ҫичӗ юта, ют ҫӗре
Парса ятӑр, мӗскӗне.
Халӗ хӗрӗр, мӗскӗнӗр,
Асап курса пурӑнать.
Ана ватӑ упӑшки
Йытӑ вырӑнне хурать.
Мӗншӗн мана савнинчен
Ҫаплах ятӑр уйӑрса?
Мӗншӗн кунта киличчен
Ҫимерӗм-ши хам пуҫа?
Мӗншӗн хаяр тӑшманпа
Ман пӗр ҫуртра пурӑнас?
Пӗтес мар-ши пуҫӑмпа?
Епле тӳссе пурӑнас?!
— Качча пачӗҫ ирӗксӗр—
Пулмарӗ-ҫке ырлӑха.
Атте-анне ӑссӑрри
Ырлӑха мар, хурлӑха.
Качча пачӗҫ ирӗксӗр—
Савӑнӑҫ ҫук ку тӗнчен,
Атте-анне ӑссӑртан
Савни юлчӗ пӗр-пӗччен.
Качча пачӗҫ ирӗксӗр—
Ятӑм ҫӗрчӗ тахҫанах.
Атте-анне ӑссӑртан
Пулчӗ асапӑм анчах.
Качча пачӗҫ ирӗксӗр—
Манӑн пурӑнӑҫ хӗн-хур
Атте-анне ӑссӑртан.
Капла пурӑнса мӗн пур?

Качча пачӗҫ ирӗксӗр—
Пулмарӗ-ҫке ырлӑха,
Атте-анне ӑссӑрри
Ырлӑха мар, хурлӑха.
— Анчах манӑн савни пур—
Ҫӑлаймӗ-ши вӑл мана?
Унӑн вӑйлӑ аллисем
Пӗтермӗҫ-ши тӑшмана?
Ҫук, пуҫӑма ҫийиччен,
Тӑшманӑма пӗтерем;
Асапланса тӳсиччен,
Тӑхтамана... вӗлерем.
Анчах вӑйӑм ҫитӗ-ши!?
Епле кунтан ҫӑлӑнас?
Эй, пӳлӗхҫӗм, пулӑшсам!
Чунӑм ҫунать, мӗн тӑвас!?
Пӗтсен пӗтем, пӗт, тӑшман!
Пурӑнӑҫӑм ырах мар.
Наркӑмӑшӑм, эс паян
Хӑвӑн ӗҫне туса пар!..—
Ҫапла паян пӳртӗнче
Нарспи, мӗскӗн, хурланать.
Чунӗ вӗркет, пуҫӗнче
Усал шухӑш хускалать.

---

Бут пек хӗвел выляса
Ҫӳл тӳпене хӑпарать,
Хуллен-хуллен ярӑнса
Кӑнтӑрлана сулӑнать.
Тулта тӗнче хӗпӗртет,
Тулта тӗнче ялтӑрать.
Нарспи пӳртӗнче йӗрет,
Унӑн чӗри ҫурӑлать.
Сентти килет сиктерсе,
Кӗвентине утланса.
Инкӗш патне ҫӗмӗрсе
Кӗрсе карӗ, ахӑрса.
Ҫапать паттӑр лашине
Хӑй аллинчи хуллипе.
Ансӑртранах инкӗшне
Тапса илет урипе.
Анчах вӑл та выляма
Аптӑрарӗ инкӗшпе,
Аптӑраса урама
Тухса карӗ лашипе.

---

Вӗрет, сурать сарӑ кин,
Хӑй яшкине пӑтратса.

Хуран айĕ çĕлен пек
Çунать вучĕ явăнса:
«Çитмĕл тинĕс леш енчен
Килет карчăк Шапатан,
Вĕр, сур, карчăк, яшкана—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Утмăл тинĕс уттинче
Ларать, сикет йĕс пукан,
Сикех, сикех, йĕс пукан,—
Пĕттĕр усал Тăхтаман!
Вăтăр та пĕр ту çинче
Йĕс хуранра пиç, яшка.
Çав яшкара пиç, çĕлен,
Пиç тамăкра, упăшка!»
Вĕрет, сурать сарă кин,
Хăй яшкине пăтратса.
Вилĕм яшки вĕрет-çке
Çĕлен пекех чашласа.

---

Каç пулсассăн упăшки
Килчĕ хиртен çаврăнса.
Сĕтел çийĕнчи яшки
Ларать пăсне кăларса.
Кашăк илчĕ.Тăхтаман,
Ларчĕ сĕтел хушшине.
— Яшка тутлă, çи ларса!—
Тесе мухтать яшкине.
Усал куçпа çаврăрса
Кăтартать вăл чăмăрне:
— Яшка тутлă, çи ларса!—
Кăшкăрать вăл арăмне.
—Çийĕп-çке-ха кайран та,
Пит çиессĕмех килмест.—
Ах, Нарспийĕ çавăнта
Тухса каять, тӳсеймест.
Тулти ларать куççульне
Тăпра çине юхтарса,
Пӳртри çиет яшкине
Урлă-пирлĕ тайăлса.

---

Çиех, çиех, Тăхтаман,
Наркăмăшлă яшкана.
Ентĕ эсĕ малашне
Упăшка мар арăмна.
Пĕтрĕн ĕнтĕ, Тăхтаман,
Çутă тĕнче санăн мар!..
— Нарспи, часрах кĕр пӳрте!
Ыйăх килет, вырăн сар!

Ака турăм, ĕшентĕм,
Ашăм çунать çавтерех.
Яшка хыççăн шыв ĕçрĕм,
Туйăнчĕ эрех пекех.—
Нарспи кĕчĕ итлесе,
Çĕрте ларать упăшки:
Пĕтĕм ăшне-чиккине
Çурать хăватлă яшки.
Арăм сарчĕ вырăнне,
Упăшкине вырттарчĕ.
Çĕкле-çĕкле çапрĕ те,
Чунĕ ӳтне хăварчĕ.

---

Пĕтрĕ пĕр чун тĕнчере,
Ĕçĕсемшĕн хупланчĕ.
Пĕтрĕ чăваш ĕмĕре,
Унăн чĕри лăпланчĕ.
Пӳртри сĕтел-пукансем
Хăратаççĕ арăмне,
Пайтах пăхрĕç шеллесе
Хуçи сивĕ виллине.
Анчах çĕрле пулчĕ те,
Сĕм хупларĕ пӳрт ăшне,
Хăйĕн вăрăм аллипе
Хăратать вăл Нарспие.
Пĕтрĕ чăваш ĕмĕре,
Вырăн çинчен тăрас çук,
Вĕçĕ выльăх-чĕрлĕхне
Тăрса апат парас çук;
Выçă ака лашисем
Кĕçенеççĕ картара,
Анчах эсир, тăлăхсем,
Курассăр çук хуçăра!

---

Ял вĕçĕнче сĕм вăрман
Чăшăлтатать çулçипе.
Хушка çăлтăр вылятать
Çӳл тӳпере çуттипе.
Хушăлкари чăвашсем
Çывăраççĕ харлатса.
Анкартинчи тăмана
Анчах вĕçет ухлатса.
Уйăх кукри ярăнса
Тухрĕ вăрман хыçĕнчен.
Шăппăн-шăппăн çеç утса
Тухрĕ Нарспи пӳртĕнчен.
Карĕ мĕлке пек шуса
Анкартисем хыçнелле.

Ялтан тухрĕ, ыткӑнса
Чупрĕ вӑрман ӑшнелле.
Курак тесе ӑнтӑлса
Уйӑх чупрĕ тахҫанччен,
Вӑрман анчах шавласа
Юлчĕ Нарспи хыҫĕнчен.

---

Нарспи пырать вӑрманпа
Темшĕн ытла ыткӑнса,
Шӑппӑн тӑрать сĕм вӑрман,
Нарспи чунне хӑратса.
Армак-чармак йывӑҫсем
Пуҫĕсемпе сулласҫĕ,
Нарспи иртсе пынӑ чух
Ҫулне пӳлсе тӑраҫҫĕ.
Ват йывӑҫсем хушшинче
Арҫурисем выляҫҫĕ,
Нарспи иртсе пынӑ чух
Аллисене тӑсаҫҫĕ.
Сасартӑках ҫил тухса
Асрĕ кайрĕ сĕм вӑрман,
Йĕри-тавра ахӑрать:
«Тыт арӑмна, Тӑхтаман!
Тыт арӑмна, упӑшка,
Тарать усал арӑму!»
Вӑтӑр та пĕр шуйттан пек
Вӑрман улать: у-у-у!

---

Ирех тӑрса тумланса,
Сентти тухрĕ выляма,
Кĕвентине утланса,
Чупрĕ инкĕшне курма.
Анчах инкĕш курӑнмасть,
Пиччĕш халь те ҫывӑрать,
Тӑратса та вӑранмасть:
Сентти шӑпах аптӑрать.
Пĕр ҫын килсе кĕчĕ те,
Хытса карĕ вырӑнтах;
Пӑхса тӑчĕ-тӑчĕ те,
Тухса карĕ ҫавӑнтах.
Пӑртак тӑрсан, вӑл кайсан,
Тулчĕ пӳрте тулли ҫын:
Епле вилнĕ Тӑхтаман?
Ӑҫта кайнӑ Нарспи кин?
Ҫук, мĕн чухлĕ ыйтсан та,
Сире виле калас ҫук.
Нарспи ҫӳрет вӑрманта,
Эсир ӑна тупас ҫук.

## 11. Силпире

Аслӑ Силпи яленче
Хуллен шӑвать пурӑнӑҫ.
Иртсе карĕҫ Ҫимĕкри
Ырӑлӑхпа савӑнӑҫ.
Чӑваш кĕпи улача,
Хир варринче кӑн-кӑвак,
Ĕҫчен чӑваш вӑкӑр пек,
Юрла-юрла ĕҫ тӑвать.
Тӑрать ҫурӑмпуҫĕпе,
Ирех хире вӑл тухать.
Кӑшт-кӑшт апат тӑвать те,
Ҫутӑ ҫава вӑл йӑтать.
Улӑк хыҫҫӑн чӑвашсем
Айкашрĕҫĕ хирсенче:
Валем, купа, капансем
Ларчĕҫ улӑх варринче.
Ҫивчĕ ҫава вашлатрĕ
Ҫулман ҫаран ҫийĕнче.
Пуҫлӑ ыраш саралчĕ
Ҫеҫен хирсен хушшинче.

---

Сӑмах нумай ял ҫинче
Ҫемҫе чĕлхе вĕҫĕнче.
Тĕрĕсси те пур-тӑр ҫав
Ялти сӑмах хушшинче.
Силпире те этемсем:
Нарспи, Тӑхтаман, теҫҫĕ.
Вĕсем тахҫан Тӑхтаман
Хаяррине пĕлеҫҫĕ.
Михетертен шикленсе,
Вӑрттӑн ҫĕрте сӑмахсем;
Пуҫне чиксе шеллесе,
Аптӑраҫҫĕ чӑвашсем.
Сетнер ача, ҫынсенчен
Ҫав сӑмаха илтсенех,
Амӑшĕнчен уйрӑлса
Карĕ таҫта пĕчченех.
Ҫынсем хирте ĕҫлесе
Каҫпа килне килеҫҫĕ,
Каҫхи апат тунӑ чух:
Нарспи, Сетнер, тееҫҫĕ.

---

Сетнер утрĕ пĕр-пĕччен,
Кĕрсе карĕ вăрмана.
Нарспи асапне илтсе,
Вилĕм сунать тăшмана:
— Тĕттĕм пулĕ, каç пулĕ
Тăшман патне çитиччен.
Тăшман чĕри лăпланĕ
Хĕвел кусса тухиччен.
Хĕвел тухĕ, çутатĕ,
Этем тăрĕ ыйхăран.

Тăшман анчах вăранмĕ
Ыйхи ытла йывăртан.
Хĕвел тухĕ, çутатĕ.
Эпĕ пулăп вăрманта.
Тăшман, выртăн, хускалмăн,
Нарспи пулмĕ çуртăнта,—
Анчах Нарспи унсăрах
Кĕçĕр тухрĕ килĕнчен.
Хăех тарчĕ тăшманран
Савни пырса çитиччен.

## 12. Вăрманта

Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Вĕçĕ-хĕрри курăнмасть.
Кутсăр-пуççăр çил тухсан,
Чарăнассăн туйăнмасть.
Шавлать, кашлать сĕм вăрман,
Тамăкри пек ахăрать.
Те арçури, те шуйттан
Çав териех ашкăнать.
Тапхăр-тапхăр çил килет
Пăлтăр-палтăр çавăрса.
Тĕттĕм вăрман ÿхĕрет
Çĕре çитех авăнса.
Хура пĕлĕт пĕрмаях
Шăвать вăрман тăрринче.
Ярать çиçĕм çĕр çурсах
Хура пĕлĕт хушшинче.

Аçа çапать, шартлатать,
Пĕтĕм тĕнче кисренет,
Çăмăр çырма пек юхать,
Лупашкасенче кĕрлет.

Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса
Мĕскĕн чуна хăратан?

Варман тата хытăрах
Шавлать, йĕрет, ахăрать.
Тура çырлах, ан пăрах!
Ахăрсаман хускалать!

Ах, çылăхлă пуçăма
Аçта чиксе хурам-ши?
Ах, çылăхлă чунăма
Епле тытса чарам-ши?

Епле Сетнер мĕскĕн-çке
Урнă вăрман ăшĕнче.
Епле çирĕп йывăççем
Юрлаççĕ пуç тăрринче.
Вăрман хĕсĕк çулĕпе,
Аш çуннине пусарса,
Вăрман шавне хуплас пек,
Пырать Сетнер юрласа:
— Сĕм-сĕм вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Мĕншĕн шăй-шай шăхăрса
Мĕскĕн чуна хăратан?
Ах, ман хуйхăм, итле-ха:
Мĕншĕн мана çунтаран?
Мĕншĕн мана, тăлăха,
Савăнăçа мантаран?
Çуралтăм мĕн аннерен
Хĕн-хур, асап курма çеç.
Çав асапран, хĕнлĕхрен
Çамрăк пуçăм пĕтни çеç.
Çамрăк пуçăм пĕтмĕччĕ,
Мулăм çукки пĕтерчĕ,
Вăл та пулин юрĕччĕ,
Çын ухмаххи пĕтерчĕ.
Çын ухмаххи юрĕччĕ,
Усал тăшман тупăнчĕ.
Усал тăшман пĕтĕччĕ,
Тура çырни курăнчĕ.

---

Сетнер юрлать юррине.
Вăйлă тăвăл тапранса,
Сетнер юррине илсе
Вĕçет йĕрсе, ахăрса.
Çав хуйхăллă сасăсем
Чуна çурса йĕреççĕ,
Вăйлă тăвăлпа пĕрле
Таçта çитех çитеççĕ,

Хура вăрман ăшĕнче
Хуллен-хуллен пĕтеççĕ.
Çав юрăри куççульсем
Пĕр чун патне çитеççĕ.

Таçтан-таçтан аякран
Тепри хирĕç макăрать,
Усал асап-хуйхăран
Унта тепĕр чун çунать.

Такам юррин сассисем
Кĕрет Сетнер хăлхине.
Вăйлă тăвăлпа пĕрле
Юрлать Сетнер юррине:

— Хура вăрман, сĕм вăрман,
Мĕншĕн хытă шавлатăн?
Савни пекех юрласа
Вилнĕ чуна вăратан?

Тĕттĕм вăрман, сĕм вăрман,
Ан ултала тăлăха.
Савни пекех юрласа,
Ан хăварсам хурлăха.

Аслă вăрман, сĕм вăрман,
Мана чăнне кала-ха!
Мĕскĕн чуна шеллесе,
Чун савнине кăтарт-ха...

Анчах утать кунталла
Ман паталла хĕрарăм:
Ырă турă, çырлахсам!
Нарспи, Нарспи, эсĕ-им?..

---

Икĕ савни пĕрлешсен,
Пуçне тайрĕ ват юман.
Пĕр-ик тапхăр çил вĕрсен,
Шăп лăпланчĕ сĕм вăрман.
Хура пĕлĕт саланса
Пĕтрĕ вăрман хыçĕнче.
Хĕвел пăхать шăратса,
Кайăк юрлать йăвинче.
Курăк çинчи сывлăма
Хĕвел парать ăшшине.
Икĕ чуна савăшма
Хĕвел парать çуттине.
Ялтăртатать ырă кун,
Усал кунăн мĕн ĕç пур?
Савăнса утать ик чун,
Çичĕ ютăн мĕн ĕç пур?
Анчах вăрман ăшĕнче
Хура кайăк чăйлатать:
Ай, Тăхтаман, Тăхтаман,
Нарспи чунне вăл шырать!

## 13. Атте-анне

Сетнер пĕчĕк пӳртĕнче
Вĕсем иккĕш лараççĕ.
*Лутра сĕтел хушшинче*
Каçхи апат тăваççĕ.
Сетнер ватă амăшĕ
Турăх тупрĕ кӳршĕрен,
Çăкăр-тăвар кăларса
Хучĕ сĕтел ăшĕнчен.
Апатланса икĕ чун
Хĕрӳ сăмах калаçать.
Ватă карчăк—амăшĕ
Шăппăн итлесе ларать.
**Асăнаççĕ ĕлĕкхи**
**Ырă, лăпкă пурнăçне,**
**Каçхи** вăйă-улаха,
Çимĕкченхи кунсене.
**Сăсартăках илтĕнчĕ**
**Ура сасси пăлтăртан.**
**Михетерпе карчăкĕ**
**Килчĕç кĕчĕç алăкран.**

К а р ч ă к:

Пирĕн Нарспи ку пӳртре
Çук-ши тесе килтĕмĕр.
Ялти ырă çынсенчен
Кунта тесе илтрĕмĕр.

М и х е т е р:

Эх, хĕр, хĕ-ĕр... Хĕр-и эс!
Нарспи, мĕскер хăтлантăн?
Епле çынсем умĕнче
Çак намăса кăтартрăн?
Мĕн çитмерĕ-ши сана,
Мĕн çитмерĕ тĕнчере?
Мĕншĕн, хĕрĕм, мĕн пуртан,
Юрататăн Сетнере?
Пуян хĕрĕ пуçупа
Мĕншĕн çапла хăтлантăн?
Ĕмĕр курман намăса
Ват пуçăма кăтартрăн?

Карчăк:

Мĕн çитмен-ши ухмаха,
Упăшкине вĕлерме,
Çак Сетнерпе вăрманта
Лапăштатса çÿреме?

Михетер:

Турра шĕкĕр,—халиччен
Усал сăмах илтменччĕ,
Çак тарана çитиччен
Киремет те тивменччĕ,
Манăн килĕм-çуртăма
Ыр пирĕшти пăхатчĕ,
Ыр пирĕшти пăхнипе
Ялта ятăм кайманччĕ,
Пÿлĕх, Хăрпан, Çут-тĕнче
Мана савса тăратчĕç,
Кăвак-хуппи, Çут-Хĕвел
Мана тупăш паратчĕç.
Çак тарана çитрĕм те,
Ватă пуçăм усăнчĕ.
Эсĕ çапла пулнипе
Ырă кунăм пăсăлчĕ...

Карчăк *(Михетере)*:

Вăрçсам ĕнтĕ хытăрах,
Пăсăрлантар Сетнерне:
Еçре хытнă аллипе
Ан хапсăнтăр çын хĕрне!

Михетер:

**Мĕн** кĕçĕнрен ÿстертĕм,
**Хĕр** **кăмăлне** татмарăм,
**Савнă** **хĕршĕн** пуянлăх
**Куйĕн-çĕрĕн** пуçтартăм.
**Кантăрла** та, çĕрле те
**Канлĕ ыйхă** курмарăм.
**Хĕрĕмшĕнех** тăрăшса
**Куçăмсене** **хупмарăм**.
**Епле** **качча** парăп-ши,
**Тесе** **ялан** **шутларăм**.
**Хĕр** **телейшĕн** **тăрăшса**
**Пуян** **качча** **шырарăм**.
**Качча** **патăм**, **туй** **турăм**,
**Паян** **акă** **мĕн** **çитрĕ**,
**Манăн** **ватă** **пуçăма**
**Паян** **акă** **мĕн** **çирĕ**?

Карчăк:

**Шеллеместĕн аннÿне,**
**Ах, çĕр-çăтманă пуçна!**
**Кăмăн хĕрĕ пултăн-ши,**
**Кам ÿстерчĕ-ши сана?**

Михетер:

**Мĕн кĕçĕнрен ÿстертĕм**
**Питне пăхса савăнма.**
Çак тарана **çитрĕм те,**
Хĕрĕм çирĕ **пуçăма.**
Аçу-аннÿ ирĕкĕ
**Пулчĕ çĕрĕ вырăнне.**
Пĕр Сетнершĕн **тăктартăн**
Аçу-аннÿн шур çÿçне.
**Пулăшмарĕ паянлăх,**
**Пулăшмарĕ сăмах та.**
**Пуян качча çумĕнче**
**Апла пулмĕ ухмах та.**

Нарспи:

Эй, аттеçĕм, пурнăç мар
Савман качча килĕнче...
Пуянлăхра анчах мар
Ыр курасси,—çыннинче...

Амăшĕ:

Э, э, усал, ытлашши
Ан кар ĕнтĕ çăварна.
Аннÿн ăшне çунтаран,
Турран килешшĕ пуçна!

Михетер:

Çак намăса кăтартрăн,—
Ялти çынсем мĕн калĕç?
Хĕрне ан ман, ват супнă!—
Аçу çине кăтартĕç.
Анчах ялти çăварсем
Кирек те мĕн калаçчĕр,
Яту çĕрнĕ пулсан та,
Çапах эсĕ манăн хĕр.
Атя, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шатăк ку пÿртрен.
Тепрер каччă тупăпăр
Яту çĕрсех кайиччен.
Атя, Нарспи, ан хуйхăр:
Санăн аçу пур вĕт-ха.

Яту пӗтнӗ пулсан та,
Аҫун мулӗ пур вӗт-ха.

Карчӑк:

Атя, йытӑ, хӑвӑртрах,
Пӗртте мана пӑхмастӑн.
Сетнер, йытӑ, кӗҫҫе пит,
Пуян хӗрне ан хапсӑн!

Нарспи:

Эй, аттеҫӗм, аттеҫӗм,
Мӗншӗн мана ҫиетӗн?
Намӑс кӳнӗ хӗрӗре
Хӑвӑн патна чӗнетӗн?.,

Карчӑк:

Ав, тата мӗн калаҫать!
Савнӑ хӗрне итле-ха!

Михетер:

Ҫитӗ, карчӑк, вулашма,
Хӗр сӑмахне итлер-ха.

Нарспи:

Арӑм пулнӑ пуҫӑмпа
Киле пырса тӑрӑп-и?
Савман качча кайсассӑн,
Татах асап чӑтӑп-и?
Ҫук, ҫук, атте, ан чӗн те:
Халь тин киле пыраймӑп.
Ҫапла пулҫа пӗтсен тин,
Каччӑ кӗтсе лараймӑп.
Эсир мана ӳстертӗр,
Ача чухне юратрӑр,
Анчах ӳссе ҫитрӗм те,
Хӗрӗр чунне курмарӑр.
Эпӗ сирӗ кӗлтурӑм,
Эпӗ сире йӑлӑнтӑм.
Вӗҫне ҫите пуҫласан,
Йӑваланса макӑртӑм.
Анчах эсир хӗрӗре
Устерессе ӳстертӗр,
Устертӗр те, укҫашӑн
Сутса ярса пӗтертӗр.

Ача чухне хӗрӗре:
Юрататтӑр, теттӗрччӗ,
Савнӑ хӗрӗр мӗн ыйтнӑ—
Ана пурте хатӗрччӗ.

Ӳссе ҫитрӗм, аттене:
Пӗр ҫул кӗт-ха, терӗм те,
Атте вӑрҫса пӗтерчӗ,
Анне ҫӳҫрен сӗтӗрчӗ.
Мӗншӗн манӑн кӑмӑла,
Ҫав юлашки кӑмӑла,
Тумарӑн-ши, аттеҫӗм?
Халь пулмӑттӑм каплалла.
Мӗншӗн ҫапла ху хӗрне
Парса ятӑн кашкӑра?—
Саншӑн ҫав пур ырӑлӑх
Мӗн пурӗ те укҫара...
Эпӗ асап курнишӗн
Ху айӑплӑ, эпӗ мар,
Сетнер кӗрӳ пулмасан,
Эпӗ сирӗн хӗрӗр мар.
Эй, аттеҫӗм, аннеҫӗм,
Сетнерпеле пехиллӗр—
Ҫавӑн чухне тин вара
Ӗмӗр пӗрле пулӑпӑр.

Карчӑк:

Ав-ав, хӗрӳ мӗн калать—
Сетнер, шуйттан, илӗртнӗ.
И-и, Михетер, каяр-ха,
Хӗрӳ ҫине сур ӗнтӗ!

Михетер:

Ы-ых, Сетнер, астӑвӑн:
Манӑн хӗре эс ҫирӗн!
Эсӗ, ҫавтер усал хӗр,
Хура пӳртрех тип эппин!
Аҫу килне, чим халӗ,
Хӑвах чупса пырӑн-ха.
Аҫу мӗнле ыррине
Ҫавӑн чухне курӑн-ха.
Атя, ватӑ карчӑкӑм,
Каяр ӗнтӗ килелле.
Ӗнтӗ сӑмах пӗтрӗ пуль
Паян пирӗн хӗрпеле.

Карчӑк:

Пӗтӗр, типӗр ҫакӑнта,
Типӗр, хӑрӑк турат пек!
Шӑммӑр-шаккӑр ҫӗриччен
Асапланӑр йытӑ пек!—
Тухса карӗҫ ылханса
Ашшӗ-амӑш хӑй хӗрне.

Урам тăрăх карчăкĕ
Çаптарать хăй сăмахне.
Намăсланса, хĕрелсе
Хĕвел анчĕ, пытанчĕ.
Сетнер амăш ахлатса
Сĕтел çине пуçтарчĕ.

## 14. Тăвата виле

Йывăр ĕçсем хыçĕнчен
Ыйхă темрен те паха:
Силпи ялĕн çыннисем
Карĕç тутлă ыйăха.
Çывăраççĕ этемсем.
Хура вăрман тĕк тăрать.
Тăрсан-тăрсан чашласа
Çил вĕрнипе вăранать...
Килсе тухрĕç вăрмантан
Акă икĕ урапа.
Шăппăн шурĕç ялалла
Парăн-парăн лашапа...
Акă сасă илтĕнет,
Чуна çурса ян ярать.
Авă, сасса илтнĕ те,
Пĕр çын урампа чупать...
Шăлтăр-шалтăр ташласа
Урапасем кустарчĕç.
Вăрман ăшне кустарса
Кĕрсе карĕç, çухалчĕç...

---

Шăри-шари çын шавлать,
Урам тăрăх чупкалать.
—Михетере çаратнă!—
Тесе пĕри кăшкăрать.
Пурте Тури касалла
Хашка-хашка чупаççĕ.
— Мен пулнă та мĕн пулнă?—
Пĕр-перинчен ыйтаççĕ.
— Михетере çаратнă,
Пĕр япала хăварман!
Сĕр-çатмана вăрăсем
Турăран та хăраман:
Михетере карчăкне
Пĕтĕмпе те вĕлернĕ!
Çичĕ тарçă-терçине
Эсрел пырса ӳсĕртнĕ.
Сетнер тухса çитнĕ-мĕн,
Илтсе карчăк сассине,
Вăрă, шуйттан, пурттипе
Пуçнех çурнă унăнне!
Михетере вĕлернĕ,
Мулне-мĕнне хăварман.
Сĕмсĕр-пуççăр вăррисем
Турăран та хараман!
Пĕтнĕ мĕскĕн Сетнер те
Усал вăрă пурттинчен.
Кун пек усал ĕç курман
Силпи ялĕ халиччен.
Михетерĕн Нарспийĕ
Пĕр куççуль те юхтармасть:
Ашшĕн пушă килĕнче
Вырăнтан та хускалмасть.
Кăтăр-кăтăр арман чулĕ
Чĕре çинче авăрать.
Арман чулĕ айĕнче
Мĕскĕн чĕре çурăлать.
Ах, çурăлса карĕ те.
Нарспи карĕ йăванса;
Тин ăн килсе кĕчĕ те,
Йĕрсе ячĕ кăшкăрса:
— Эй, аттеçĕм, аннеçĕм,
Мĕншĕн мана çуратрăр?
Тĕнче асапне курма
Кун çутине кăтартрăр.
Эй, турăçăм-пӳлĕхçĕм,
Мĕншĕн мана чун патăн?
Мĕскĕн çамрăк пуçăма
Пĕр телей те ямарăн.
Эй, чунăмçăм, çамрăк пуç,
Мĕншĕн капла пултăн-ши!
Пĕтĕм тĕнче хушшинче
Эсĕ пултăн ытлашши...—
Йĕре-йĕре хуйхăрса
Нарспи утрĕ хирелле.
Ялтан тухрĕ, уттарчĕ
Кантăр-варĕ еннелле.
Ялти çынсем шеллесе
Пăхса юлчĕç хыçĕнчен.
Паян пулнă ĕç çинчен
Пакăлтатрĕç тĕттĕмччен.

---

Тепĕр кунне ирхине
Чăваш хире тухмарĕ.
Эрне куна асăнса,
Нимĕн ĕç те тумарĕ.

Елёкхи пек урама
Сарă хёрсем тухмарёç.
Вăй ташшисем ташлама
Каччисем те хăймарёç.
Тёрлё çёрте ваттисем
Ушкăн-ушкăн тăраççё,
Михетерён кил-çуртне
Сутма канаш тăваççё.
Нарспи таçта кайнăран
Ячёç ăна шырама.
Михетерпе карчăкне
Пурте утрёç пытарма.
Аслă масар-хăямат,
Виçё виле шăтăкра.
Ача чипер Сетнер те
Выртать юман тупăкра.

---

Кăнтăрлапа пётём ял
Пёççисене шарт çапать:
Нарспи виллине тупса,
Нимён тума аптăрать.
Шыракансем таврăнчёç
Лашисене çунтарса:
Кантăр-варта йăмраран
Вилнё, терёç, çакăнса...
Вара вилнё выртăннех
Хучёç ăна пытарса.
Тăпри тавра шёшкёрен
Çатан лартрёç çавăрса.

1907—1908

Хёвел анчё, каç пулчё,
Чăваш çынни çывăрать.
Хёвел тухрё, çутăлчё,
Чăваш ёçе тытăнать.
Анчах пирён Нарспишён
Ёмёрлёхе каç пулчё.
Ёмёр тёттём тупăкра
Хуйхи-суйхи татăлчё.

---

Çапла иртрё пурăнăç,
Пуçё пётрё çамрăклах.
Ашшё-амăш ухмахран
Пётрё хуйхă-суйхăпах.
Курчё çутă тёнчене
Пÿлёх-турă пÿрнипе,
Ÿсрё, пулчё сарă хёр
Атте-анне пăхнипе.
Пÿлёх-туррăн кăмăлё
Аслă турё хăй хёрне,
Атте-анне ирёкё
Çирё сарă хёр пуçне.
Выртрё хёсёк тупăка,
Ячё юлчё ял çинче.
Ун хурлăхлă юррисем
Юлчёç çынсен асёнче.
Халь те пулин Силпирё
Асăнаççё мёскёне.
Ялан, çăмăр çумасан,
Шыв сапаççё тăприне.

## ШУЙТТАН ЧУРИ

(Трагеди сыпăкёсем)

Шăллё:

Апла пулсан, кай кунтан,
Эпё сана тăван мар!
Тăшман çынна нихçан та
Памăп турă панине.

Пиччёшё:

Бёлеретёп! Парсан пар!

Шăллё:

**Бёлер, чуну çитейсен.**
**(Батă юман хыçёнчен**
**Шуйттан татах хётёртет).**

Шуйттан:

Ил укçине, ил туртса!
Ылттăн-кёмёл çап-çутă
Хутаç тулли ялтăрать,
Ил укçине—вăл санăн!
Ухмах çыннăн куçёсем
Йăлтăр-ялтăр çунаççё.
Хутаç çине пăхнă та,
Хутаç патне туртăнать.
Анчах шăлнё укçине
Айне хурса ларнă-мён.
Ик аллинче ик çёçё
Йăлтăртатса тăраççё.

Шăллĕ:

Вилсен вилĕп, чĕрĕлле
Памăп турă парнине.
(Ватă юман хыҫĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртет).

Шуйттан:

Ил, ил, ухмах, мĕн тата
Каллĕ-маллĕ пусатăн?

Акă тăр-тăр чĕтресе
Сăнă ҫӳле ҫĕкленчĕ,
Анчах чунĕ ҫитмесĕр
Татах аяла анчĕ.
Ватă юман хыҫĕнчен
Шуйттан татах хĕтĕртрĕ,
Сăнă татах ҫӳлелле
Яр улăхса карĕ те,
Пиччĕш хăйĕн шăллĕне
Чиксе хучĕ укҫашăн.
Ҫӳлтен кĕр-кĕр аслати
Кĕрлет, вĕркет хаяррăн.
Хура пĕлĕт куҫхарши
Тата хытă пĕрĕннĕ.
Ухмах этем, шăллĕне
Сăнăпала чиксенех,
Илчĕ укҫа хутаҫне,
Ташша ячĕ савăнса.

Пиччĕшĕ:

Мана мĕн пит кирлĕччĕ?
Укҫа, укҫа,—акă вăл!
Укҫа пулсан мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ?
Ылттăн-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл!
Кайăн киле ыранах,
Ситĕн киле каҫченех,
Ылттăн-кĕмĕл ҫурт лартăп,
Вылях тытăп пинĕпе.
Иртерĕн ҫав пурнăҫа
Савăнса ҫеҫ, кулса ҫеҫ.
Текех канăҫсăр сынсем
Вăрҫасерне ҫӳреччĕр.
Мана тата мĕн ҫитмен?
Манăн акă пурте пур:
Ылттан-кĕмĕл манăн вăл,
Ялти пуян эпĕ вăл,
Укҫа пулсан мул та пур,
Унтан урăх мĕн кирлĕ!

Шуйттан юман хыҫĕнчен
Сиксе тухрĕ ахăрса;
Этем хыҫҫăн шуйттан та
Ташша ячĕ савăнса.
Ухмах ҫынна курăнми
Е ыталать аллипе,
Е чуптăвать тутипе...
...«Шуйттан чури» теейсе
Этем укҫа хутаҫне
Хăрах алăпа йатнă.
Тепĕр аллинчи хĕҫпе
Шаккать укҫа хутаҫне,
Хутаҫ ăшĕнчи укҫи
Шанкăртатать илĕртсе,
Ылттăн-кĕмĕл кĕввипе
Ҫын такмаклать ташласа.

Пиччĕшĕ:

Мĕншĕн кунта кăлăхах
Манăн пуҫа ҫухатас?

Этем ҫапла шухăшлать,
Тарса кайма хăтланса.
Ҫӳлтен, ҫӳлтен ҫавăнтах
Темле сасă илтĕнет:
— Мĕскĕн этем, мĕн турăн?
Куҫна уҫса пăх, мĕскĕн,
Ухмах ĕҫӳ ҫинелле.

Тăпра ҫине ҫавăнтах
Этем карĕ йăванса,
Анĕ тухса кайнипе
Ури анчĕ хуҫăлса.
Сасартăках ҫил тухать,
Тухса кĕрлесе каять,
Пĕтĕм ҫĕре кисретсе
Аҫа шартлатса ярать.
Шуйттан юман хыҫĕнче
Ахăлтатать хăрушшăн,
Ансăр этем патнелле
Аллисене вăл тăсать,
Ирсĕр ҫăварне карса
Ахăлтатать савăнса.
Ансăр этем, вилнĕ пек,
Кăвакарса кайнă хăй,
Шуйттан ăна пăхать те

Ахăлтатать хăрушшăн,
Тĕнче тĕпне хускатса
Çут тĕнчене ишес пек,
Аслă тăват кĕтеслĕ
Çут тĕнчене илес пек...

Чул çумĕнче пĕр этем
Пуçне çĕклет йăнăшса.

Шăллĕ:

Асапланса выртатăп,
Сăнă тухрĕ витĕрех
Кăкăрăма шăтарса.
Мана хамăн айăпшăн
Турă асап ячĕ пуль.
Эй, турăçăм, пиччем те
Ку асапа курминччĕ,
Усал ĕçне тăвиччен
Унăн ăсне çутатсам;
Тăвансемшĕн çапăçма
Тасат унăн кăмăлне;
Вăрçă хушшине кўртсе
Вĕрилентер чĕрине,
Тăвансемшĕн çапăçса
Тасатсамччĕ айăпне.
Бăл та çаплах, ман пекех,
Шуйттан чури пулминччĕ.
Пиччем, пиччем! Эсĕ те
Суккăр ан юл ман пекех.
Куçна уçса пăх, пиччем,
Мĕнле эпир сынсемччĕ?!
Укçашăнах çунтăмăр,
Ылттăн-кĕмĕлшĕн çунса,
Сынна тĕрлĕ хĕстерсе,
Çынна йĕртсе-макăртса
Пуçтартăмăр пуянлăх.
Пуçтартăмăр пуянлăх
Хамăр ырă курасшăн,
Анчах пухнă мулпала
Эпир тăранмарăмăр.
Вăрçă тухрĕ... Вăрçăра
Вилнисене çаратса
Укçа тупма, пуçтарма
Эпир вăрçа килтĕмĕр.
Анне ячĕ ўлесе
Пирĕн шухăша сиссе,
Урайĕнче йăваланчĕ
Мĕскĕн анне ман умра:

— Ан кай, ачам, ан кайсам,
Хăвăн пуçна пĕтерĕн,
Ан ухмахлан укçашăн,
Мĕн пурри те çитĕ-çке...
Анчах пирĕн чĕресем
Хускалмарĕç çапах та.
Арăм ячĕ ўлесе
Тăлăх юласне сиссе:
— Ан кай, ан кай, пĕтетĕн.
Чуну ўкĕ тамăка...
Анчах эпĕ ăна та
Итлемерĕм çапах та.
Ман шухăшра укçа çеç
Йăлтăртатса тăратчĕ.
Хăрамасăр-тумасăр
Тухрăмăр та килтĕмĕр.
Анне юлчĕ ылханса,
Арăм юлчĕ макăрса.
Анчах çўлтен, эй, турă!
Эсĕ пире сăнанă.
Хамăн усал шухăшшăн
Эсĕ мана тавăртăн:
Вăрçа кĕнĕ-кĕменех
Сăнă чикрĕç кăкăра;
Ансăр пулсан, йăванса
Юлтăм эпĕ хир варне
Пĕр пĕчченех çакăнта.
Хамăн айăпа курса,
Ирсĕр ĕçĕме пĕлсе
Пăшăрханса çунмашкăн,
Пĕр пĕчченех выçăхса
Асапланса вилмешкĕн
Тискер пушă хир варне,
Туррăм, мана пăрахрăн.
Ирсĕр чунлă усала
Тивĕçлине тавăртăн...
Вăйăм пĕтрĕ, ўт сивĕ,
Чĕрем ăшне хурт çиет.
Эй, турă! Айăпăмшăн
Чунтан-вартан ўкĕнсе,
Чунтан-вартан йăлăнса
Санран çăлнăç ыйтатăп!
Сĕм пĕлĕтсем юхаççĕ
Çут тĕнчене хуплас пек.
Тамăк тĕпĕ уçăлать
Ман чунăма çăтас пек.
Шуйттан тухать тамăкран
Ман чунăма илесшĕн.

Вилĕм, вилĕм килет, ав,
Тăсать хăйĕн аллине.
Тамăк ҫунать ман айра,
Ав, шуйттансем килеҫҫĕ.
Эй, турăҫăм, ҫăл мана,
Пĕтме ан пар чунăма!..
Вăйĕ пĕтсе ҫитнипе
Унăн чĕлхи чарăнчĕ.
Куҫĕсемпе анчах вăл
Ҫӳле пăхса кĕлтăвать.
Татах вăйне пуҫтарса:
Эй, турăҫăм, терĕ те
Ăнсăр пулчĕ ҫавăнтах
Вăйран-халран кайнипе.
Тĕттĕмленчĕ, каҫ пулчĕ,
Ҫил-тăвăл та лăпланчĕ,
Пĕчĕк ушкăн ҫар килет
Вилнисене пуҫтарма.
Вилнисене пуҫтарчĕҫ,
Шăтăк чавма тытăнчĕҫ.
Сăнăсемпе хĕҫсемпе
Аслă шăтăк тăваҫҫĕ.
Улăп-юман айĕнче,
Аслă чулăн ҫумĕнче
Вилнисене юрăпа
Шăтăк ăшне антарчĕҫ.
Ĕречĕпе вырттарса
Виҫҫĕ ӳксе пуҫҫапрĕҫ,
Ура ҫине тăчĕҫ те
Виҫĕ хутчен пуҫ тайрĕҫ,
Тăпра ыран ярăпăр,
Чӳкне ыран чӳклĕпĕр,
Тесе вĕсем уттарчĕҫ,
Тĕттĕм ҫĕрте ҫухалчĕҫ.

## ВЫҪĂ АПТĂРАНИСЕМ

I

Пурăнаттăн пит аван,
Курайманччĕ выҫ куна.
Анчах, тăванăм, паян
Апат лекни ҫăварна?
Ларса хырăм тăранмасть,—
Мĕнле шухăш тытатăн?
Ĕҫ шырарăн—тупăнмасть,—
Аҫта кайма тăватăн?
— Илĕп ҫĕҫĕ-пурттăма,
Чĕнĕп пĕрер юлташа,
Кайăп юта вăрлашма,
Ан асăнăр чăваша.

II

Иван пичче пӳртĕнче
Выҫа ларнă виҫĕ кун,
Анка-минкĕ пуҫĕнче
Ҫавна шухăш пулнă ун:
Тата партак ларсанах
Апат килсе тухĕ ак.—
Ак тамаша! Ҫавăнтах
Веҫрĕ кечĕ пĕр курак.
Леш, выҫăскер, куракне
Пăхса-тусса тăмарĕ,
Мĕнле апат иккенне
Ăвантарах пăхмарĕ,
Апат килчĕ, терĕ те
Ячĕ тытрĕ ҫавăнтах.
Курак пуҫĕ пĕтрĕ те,
Курак пиҫрĕ вутсăрах.

III

Ҫӳлте пĕлĕт кăн-кăвак,
Ура айĕ—шурă юр.
Хирте ҫӳрет выҫ тукмак,
Унăн пурăнăҫ хĕн-хур.
Ҫӳрет тукмак кăнтăрла,
Ҫӳрет тукмак ҫĕрĕпе,
Пырса кĕрет ялалла:
Ҫын хăвалать йыттипе.
Анчах апат тупăнмасть,
Унăн выҫă вилмелле...
Тукмак ӳкнĕ, хускалмасть,
Вăл вилнине пĕлмелле.
Пĕтерчĕ те юмахне,
Ватти хушрĕ сăмахне:
Ҫапла, ачам, выҫăхсан
Ҫын тухать ҫав ухмаха,
Хăшĕ ҫиме пулмасан
Каять вăрă-хураха,
Хăшĕ Йăван ухмах пек
Курак ҫиет аташса,
Хăшĕ кашкăр-тукмак пек
Вилсе каять, выҫăхса.

1907-мĕш ҫулхи декабрĕн 30-мĕш.

## ХАЛЬХИ САМАНА

1908-мӗш çулхи октябрӗн 28-мӗшне.[1]

Ачаш кăна ачам пур,
Пӗртте хăпа пӗлмерӗ.
Апат çисе ларнă чух
Аран çилӗ килмерӗ.
— Çыру пӗлме, çын пулма
Ялти шкула яр-ха, тет.
Çыру пӗлни мӗн тума
Кирлӗ çынна, атте?—тет.
— Ачам, ачам, ан йӗтет,
Илтес кунта ху илтӗн,
Хут вӗренни уссине,
Хут вӗренсен, ху пӗлен.
Çичӗ çула çитсессӗн,
Пăртак ăс-пуç кӗрсессӗн,
Ярăп акă сана та
Ялти шкула ăс пухма.
Турă хушсан, çын пулсан,
Курăн Чӗмпӗр хулине.
Ӗнтӗ, ачам, самана
Ӗлӗкхи мар кучуне.
Ӗлӗкчӗ вăл, ӗлӗкчӗ,
Урăх тӗслӗ ӗмӗрччӗ.
Тыră-пулă пит пулнă,
Тыră акма çӗр пулнă.
Ӗмӗр иртнӗ ӗç çинче,
Ӗç иртсессӗн—ӗçкӗре,
Анчах тӗрлӗ хуйхă та
Пайтах пулнă-çке тата.
Тухатмăш та тухатать,
Юмăçӗ те хăратать,
Асамăçсем асаççӗ,
Ача-пăчана пăсаççӗ.
Вырăссем те вӗсене,
Ырă сунса, вӗрентме
Ачисене илеççӗ,
Ашшӗ-амăшне йӗртеççӗ.

Тарăхтарать таркăн та,
Вăр-хурах та—вăрманта.
Тӗрлӗ усал-тӗселрен,
Тӗрлӗ усал чирсенчен
Чӳк кулленех тумалла,
Путек-сурăх пусмалла.
Куллен-кунах чӳк туни—
Хӗл-çăвӗпех хӗн курни.
Киреметре кӗлли пур,
Хăяматра хывни пур.
Кӗлтуса та килӗшмест,
Киремет те итлемест,
Турăсем те чӳксене
Илми пулчӗç кучуне.
Кун-çул пăсăлса карӗ,
Куç-пуç аташса карӗ:
Те тутара тухас-ха,
Те юталла тарас-ха,[2]
Анчах ыр çын тупăнчӗ
Самани те улшăнчӗ.
Урăх çулпа утрăмăр,
Урăх çӗре тухрăмăр.
Кунсăр пуçне чăвашсем
Мӗн пулӗччӗç халиччен?
Тутаралла тухӗччӗç,
Тутар тӗнне тытăччӗç.
Ырă чăваш тупăнчӗ,
Ырă ӗçе тытăнчӗ.[3]
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне, чăваша,
Пырса çапрӗ чӗрине,
Пăлхатса ячӗ чӗрене.
Пăлхатнинчен питӗрех
Шухăш ӳкрӗ пуç çине.
Çӗнӗ ӗмӗр мар-и çав?
Çӗнӗ пурнăç карӗ çав.

---

[1] Ку сăвва К. В. Иванов Чӗмпӗрти чăваш шкулӗ 40 çул тултарнине уявланă тӗле çырнă.

[2] Тутар муллисемпе пуянӗсем ӳкӗтлесе хӗтӗртнипе пӗр вăхăтра чăвашсенчен магомет тӗнне йышăнакансем пулнă. Çавна тутар пуянӗсемпе муллисем тутарпа чăваш халăхӗсене вырăс халăхӗнчен сивӗтес, ӗççыннисене хытăрах пусмăрлас тесе туса пынă.

[3] К. В. Иванов ку йӗркесенче И. Я. Яковлев чăваш халăхне вӗрентес ӗçе тытăннине хакласа калать.

Пур çёрте те ялсенче
Хура халăх хушшинче
Хут вёренме тытăнчёç,
Шкулсем нумай уçăлчёç.
Вёсен чёри Чёмпёрте,
Аслă чăваш шкулёнче.
Кёнекесем çаптарчёç,
Çын хушшине салатрёç,
Кёçке ёнтё куçёсем
Уçăлаççё чăвашсен.
Кёçке курма пуçларёç,
Тёнче кура пуçларёç.
Çав ёçсене кам турё,
Çак таранччен тăрăшрё!
Çак таранччен тарăхса,
Чăвашсемшён тăрăшса
Кун çулёнче курнине,
Шухăшпала шурнине
Кам каласа парё-ши?
Кам ырă ят сарё-ши?
Эй, самана, самана!
Мён кăтартăн малалла?
Хальхи кунсем капла-ха,
Килес кунсем мёнле-ши?
Пурăнатпăр хуллен çеç
Аслă çынсен ăсёпе.
Вёсем, пире юратса,
Хăй шухăшне хăварса,
Халăх ёçне тăваççё,
Халăх хуйхипе çунаççё.
Ырă çынсем ыйтнине,
Кирек кама кирлине
Ялан пёлсе тăраççё,
Юратайса тăваççё.
Анчах чăваш хушшинче
Чунё хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларёç,
Тăрса çапла каларёç:
«Чаплă вырăн тупасчё,
Часрах улпут пуласчё».
Тёрлё çутă тÿммешён
Тёнки тухать ав лешён.
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те астумасть:
Чёри шăнса кайнă çав,
Чёрё виллe тухнă çав.
Çитменнине çын çине
Çитмен пурнăç çитрё çав.
Йывăр кунсем килчёçё,
Выçлăх çулсем çитрёçё.
Çёрё тăвăр, тыр ÿсмест,
Тăранма та çитеймест.
(Выçă çăвар выçлăхне
Кил-картине кёрсенех
Турчăкапа тухас та,
Сухалё çине сурас та,
Хăваласах кăларас,
Хапхаранах ăсатас).
Чăтаççё-ха чăвашсем,
Вёçне çитмен-ха вёсем.
Ёçкё-çикё тунă чух,
Ёçсе-çисе ларнă чух,
Юррисене юрлаççё,
Куççулёпе кулаççё.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çёкленнё чухне
Мён пит асна килет-ши?
Мён пит чунна хёсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçăнта куç тулли?

1908.